ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

1952 ҫул Январь 21
ТУНТИКУН
№ 16 (8668)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш ҫул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери ĕҫҫыннисен ҫулпуҫĕпе учителĕ, большевиксен партийĕпе Совет государствине тăваканĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 ҫул ҫитрĕ.

Ленин ялавĕпе, аслă Сталин ертсе пынипе — малалла, коммунизм ҫĕнтерĕвĕ патне!



ЛЕНИНИЗМ ҪĔНТЕРЕТ

Ҫирĕм сакăр ҫул каялла, 1924 ҫулхи январĕн 21-мĕшĕнче, Горкăра, Мускав ҫывăхĕнче, пĕтĕм тĕнчери ĕҫҫыннисен юратнă ҫулпуҫĕпе учителĕ, большевиксен партийĕпе Совет государствине тăваканĕ, наукăсен корифейĕ, коммунизм зодчийĕ Владимир Ильич Ленин пирĕнтен ĕмĕрлĕхе уйрăлчĕ. Ленин вилни совет халăхĕшĕн, ҫĕр ҫинчи мĕнпур ĕҫҫыннисемшĕн, пĕтĕм тĕнчери рабочисен юхăмĕшĕн пысăк ҫухату пулчĕ.

Ленина пытарнă кун пĕтĕм тĕнчери пролетариат пилĕк минутлăха пур ĕҫсене те чарса хăйĕн ҫулпуҫĕпе сывпуллашрĕ. Пĕтĕм тĕнчери ĕҫҫыннисем хăйсен ашшĕне, учительне, хăйсен чи лайăх та сывăх тусне, хăйсене хӳтĕлĕкене пысăк хуйхăпа ăсатрĕҫ.

Ленин вилнĕ хыҫҫăнхи кунсенче совет ҫыннисем хăйсен речĕсене тата тачăрах Ленин—Сталин партийĕ тавра пĕтĕҫтерчĕҫ. Ĕҫҫыннисен ăнланулăрах представителĕсем ун чухне хăйсем партипе пĕрле пулнине партие массăллăн кĕнипе кăтартрĕҫ.

Ленин вилнĕ хыҫҫăн Ленин ялавне, парти ялавне В. И. Ленинăн чи шанчăклă ученикĕ, тусĕ, юлташĕ, соратникĕ, большевиксен партийĕн чи лайăх ывăлĕ Иосиф Виссарионович Сталин ҫӳле ҫĕклерĕ.

Январĕн 26-мĕшĕнче Советсен Пĕтĕм Союзри II-мĕш съезчĕн хурлăхлă ларăвĕ уҫăлнă. И. В. Сталин юлташ В. И. Ленина тупа туса историллĕ сăмах каларĕ. Вăл пĕтĕм совет халăхĕ умĕнче парти ячĕпе большевиксен партийĕн членĕн аслă ятне ҫӳлте тытма тата таçалăхра сыхласа усрама, парти пĕрлĕхне куҫ шăрҫине сыхланă пек сыхласа усрама, пролетариат диктатурине сыхласа усрама тата тĕреклетсе пыма, рабочисемпе хресченсен союзне мĕнпур вăйпа тĕреклетсе пыма, республикăсен союзне, пирĕн хĕҫпăшаллă вăйсене тĕреклетсе пыма сăмах пачĕ.

Ленина тупа туса калаиă сăмахсене пирĕн парти, Ленин—Сталин партийĕ, Сталин юлташ ертсе, ҫул кăтартса пынипе чыслăн пурнăҫларĕ, халĕ те пурнăҫлать.

Ленин хушса хăварнисене пурнăҫласа, И. В. Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕ вăрçăччен хи сталинла пилĕкҫуллăхсенче ҫĕршыва социализмла индустриализацилемелли тата ялхуҫалăхне коллективизацилемелли политикăна паттăррăн пурнăҫланипе пирĕн ҫĕршыв историллĕ кĕске срок хушшинче, патша самани вăхăтĕнче кая юлнă ҫĕршывран тĕнчере малта пыракан хăватлă индустриллĕ, шултра ялхуҫалăхлĕ ҫĕршыв, аслă держава пулса тăчĕ.

1941—1945 ҫулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă советлă социализмлă обществăпа государство строй капитализмлă обществăпа государство стройĕнчен малта тăнине, унăн хĕҫпăшаллă вăйĕсем хăватлă пулнине, ҫак вăйсем умĕнче нимĕнле тăшман та вăй ҫитерме пултарайманнине кăтартса пачĕ.

Совет халăхĕ, Ленин ялавне ҫӳле ҫĕкленĕ аслă Сталин ертсе пынипе вăрçă хыҫҫăнхи сталинла пилĕкҫуллăха срокчен тултарса ҫĕршыв экономикине нихçан пулман ҫӳлĕ пусăма ҫĕклесе малалла аталантарчĕ. Совет халăхĕ хамăр ҫĕршывра социализм обществи туса хучĕ. Вăл халĕ Ленин кăтартса хăварнисене пурнăҫласа, Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизм ҫĕнтерĕвĕшĕн кĕрешет. Совет ҫыннисем ҫутçанталăка улăштарса ҫĕнетме тытăнчĕҫ, вырăс халăхĕн аслă юханшывĕсем ҫинче коммунизмăн сталинла стройкисене тăваççĕ. Атăл, Днепр, Дон, Аму-Дарья шывĕсем ҫинче совет халăхĕ халиччен этем историйĕ курман пысăк гидроэлектростанцисем лартать, Украинăра, Крымра, Туркменире пысăк каналсем тăвать.

Ҫакăн пек пысăк ĕҫсем тума Ленин—Сталин партийĕ пăхса ҫитĕнтернĕ совет ҫыннисем кăна вăй ҫитерме пултараççĕ.

Ҫĕнĕ обществăллă строй халăхсен моралĕ-политикăллă пĕрлĕхне, тăванлăхĕпе туслăхне, советлă патриотизм туйăмне ҫуратса кăларчĕ. Совет халăхĕн ҫакăн пек паха енĕсем кунсерен мар, сехетпе ӳссе пыраççĕ. Совет Союзĕнче пур халăхсем те пĕр тан, вĕсем пуртс, пĕр ҫемьери пек пулса, коммунизм ҫĕнтерĕвĕшĕн кĕрешеççĕ. Мирлĕ ĕҫшĕн вĕсем хăйсен вăйне те, пултарулăхне те шеллесе тăмаççĕ. Вĕсем ҫакна лайăх пĕлеççĕ: кашни ҫын тăвакан ĕҫ вăл пĕтĕм общество ĕҫĕ пулса тăрать, кашни ҫын тăвакан ĕҫ вăл Совет государствин вăйне тата ытларах тĕреклетет, ĕҫҫыннисен пурнăҫне тата ытларах лайăхлатма, вĕсен культурăллă-техникăллă шайне ӳстерме пысăк майсем туса парать. Ҫавăнпа та пирĕн ҫĕршывра производство планĕсене срокчен тата иртерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăрту пысăк хăватпа вăйланса пырать.

Ҫĕнĕ ҫула кĕнĕ май пĕтĕм тĕнче, иртнĕ ҫултаăк хушшинчи ĕçсен итогĕсене турĕ. Икĕ тĕнче—икĕ итог. Капитализм системи ҫĕрсе, вилсе пырать пулсан, капитализмлă ҫĕршывсен хуҫалăхĕ арканса, ишĕрĕлсе, юхăнса пырать пулсан, пĕтĕмпех урăхла картина куратпăр Совет Союзĕнче, халăх демократи ҫĕршывĕсенче. Совет Союзĕнче хуҫалăхпа культура строительстви улăпла утăмсемпе, хăвартлăхсемпе малалла аталанса пырать. Социализм ҫулĕ ҫине тăнă халăх демократи ҫĕршывĕсем, аслă Совет Союзĕ тăванла пулăшнипе, ҫĕнĕ пурнăҫ строительствинче пысăк ҫитĕнӳсем турĕҫ. Аслă Китай халăхĕ, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, хăй ирĕке тухнăранпа иртнĕ кĕске вăхăт хушшинче хăйĕн ҫĕршывне ҫĕнĕлле йĕркелес тĕлĕшпе чăннипех историллĕ ҫĕнтерӳсем турĕ. Пĕтĕм хĕвелтухăҫĕнчи халăхсем пусмăр йĕркине хирĕç аслă кĕрешӳе ҫĕкленеççĕ. Колониллĕ тата ҫурма колониллĕ ҫĕршывсемпе пăхăнса тăракан ҫĕршывсенче нациллĕ-ирĕклĕх юхăмĕ вăйланать. Ҫакă вăл ленинизм идейисен никам ҫĕнтерейми вăй-хăватне кăтартса парать.

Англипе Америка ертсе пыракан империализм лагерĕ урса хĕҫпăшалланнă, ҫĕнĕ тĕнче вăрçине хатĕрленнĕ кунсенче пĕтĕм тĕнчери ырă шухăшлă ҫынсем Совет Союзĕ ертсе пыракан мир, социализм, демократи лагерьне пĕрлешеççĕ. Ҫĕр чăмăрĕ ҫинчи 600 миллион ҫын Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тума чĕнсе калани ҫине алă пусрĕ. Ҫакă вăл халăхсем хушшинче мир идейи нихçанхинчен те ытла вăйланса ҫитни ҫинчен калать. Ҫакăнта ленинизмăн вилĕмсĕр идейисен вăй-хăвачĕ, ҫĕнтерĕвĕ.

Пирĕн саманара мир ялавне аслă Сталин ҫӳлте ҫĕклесе пырать. Пĕтĕм тĕнчери халăхсем совет халăхĕпе пĕрле: ăçта Сталин, унта мир, унта ҫĕнтерӳ, теççĕ.

Сывă пултăр вилĕмсĕр ленинизм!

Сывă пултăр ленинизм ялавне ҫӳле ҫĕклепĕ Аслă Сталин!

В. И. Ленин произведенийĕсене чăвашла кăларни

В. И. Ленинăн уйрăм произведенийĕсене чăвашла 1919 ҫултах кăларнă. Вĕсен шутĕнче — «Выҫлăхпа кĕрешесси ҫинчен тунă доклад», «Колчака ҫĕнтернĕ май рабочисемпе хресченсем патне янă ҫыру» тата ыттисем те пур.

Ҫакăнтан пуҫласа марксизм-ленинизм классикĕсен ĕҫĕсене кăларасси вăйланса пынă. В. И. Ленин ҫырнă 53 кĕнеке чăвашла тухнă, вĕсен тиражĕ 283,2 пин экземпляр. Ҫав кĕнекесен шутĕнче «Мĕн вăл «халăх тусĕсем» тата вĕсем социал-демократсене хирĕҫ мĕнле кĕрешеççĕ», «Мĕн тумалла?», «Империализм капитализмăн чи ҫӳлти сыпăкĕ», «Государство тата революци», «Апрельти тезиссем», «Коммунизмри «сулахайлăхăн» ачалла чирĕ», «Ҫамрăксен союзĕсен задачисем ҫинчен», «Кооперации ҫинчен» тата ыттисем те пур. В. И. Ленин Октябрьти революци ҫинчен каланă статьясене, докладсене тата тухса каланă сăмахсене пухса 2 кĕнеке, социализмла Тăван ҫĕршыва хӳтĕлесси ҫинчен ҫырнă статьясене пухса тепĕр кĕнеке кăларнă. «Парти организацийĕ тата партиллĕ литература», «Европăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен лозунгĕ ҫинчен», «Инçетрен ҫырнă ҫырусем», «Совет влаçĕн черетлĕ задачисем», «Ăмăртăва мĕнле организацилемелле?» произведенисене тата ыттисене те уйрăм кĕнекесем туса кăларнă.

Чăвашгосиздатăн 1952 ҫулхи планĕ тăрăх В. И. Ленинăн 10 кĕнекине 30 пин экземплярлă тиражпа кăларма палăртнă.

В. И. Ленин Сочиненийĕсен X-мĕш томĕ узбекла пичетленсе тухнă

ТАШКЕНТ, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Узбек ССР государство издательстви В. И. Ленин Сочиненийĕсен X-мĕш томне узбекла пичетлесе кăларнă.

Ăна вырăсларан узбек чĕлхи ҫине ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Маркс—Энгельс—Ленин Институчĕн Узбек республикинчи филиалĕ куҫарса хатĕрленĕ.

В. И. Ленина асăнса

ССР Союзĕн В. И. Ленин ячĕпе тăракан Государство библиотекинче январĕн 19-мĕшĕнче «Электрификаци ҫинчен ленинла-сталинла вĕрентĕвĕн историллĕ ҫĕнтерĕвĕ» ятлă выставка уҫăлнă. Ҫак выставкăна большевиксен партине, тĕнчере пĕрремĕш социализмлă государствăна туса хунă В. И. Ленин вилнĕренпе 28 ҫул тултарнă ятпа уҫнă.

Выставкăн малти вырăнĕнче пирĕн ҫĕршывшăн электрификаци пысăк вырăн йышăнса тăни ҫинчен аслă ҫулпуҫсем В. И. Ленин тата И. В. Сталин каланă сăмахсене ҫырса хунă.

Выставкăн пĕр пайне «Гоэлро планĕнчен коммунизмăн аслă стройкисен планĕ патне ҫити», тема тăрăх тунă. Ҫак пайри материалсем электрификаци енĕпе тунă ҫитĕнӳсене, И. В. Сталин юлташ ертсе пынипе Ленин идейисем пурнăҫа кĕрсе пынине тĕплĕ кăтартса параççĕ.

Кĕнекесем, брошюрăсем, диаграммăсем, журналсемпе хаçатсенчи статьясем коммунизмăн аслă стройкисенчи пысăк ĕçсене сăнласа параççĕ. Ҫак стройкăсене ĕҫҫыннисен аслă ҫулпуҫĕ И. В. Сталин юлташ пуҫарăвĕпе тума тытăннă.

ССР Союзĕн В. И. Ленин ячĕпе тăракан государство библиотекин чылай залĕсенче вулакансем валли «Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин ертсе пынипе малалла, коммунизм ҫĕнтерĕвĕ патне!» темăпа выставкăсем тунă. (ТАСС).

В. И. Ленин ҫуралнă хулара

УЛЬЯНОВСК, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçри ĕҫҫыннисем аслă Ленина асăнса хисеп тăваççĕ, унăн биографине, ĕҫĕсене вĕренеççĕ. Ҫак кунсенче пиншер лекторсем, докладчиксем, агитаторсем предприятисенче, колхозсенче, учрежденисенче В. И. Ленин ҫинчен калаçусем, докладсем, лекцисем ирттереççĕ.

Ĕнер В. И. Ленин ячĕпе тăракан кĕнекесен двоецĕнче ленинла вулавсем пуçланчĕҫ.

«28 ҫул Ленинсĕр. Сталин юлташ ертсе пынипе, Ленин ҫулĕпе» тема тăрăх лекци вуласа панă. План тăрăх «Чĕмпĕр-Ульяновск—В. И. Ленин ҫуралнă ҫĕршыв», «В. И. Ленин сăнарĕ илемлĕ литературăра тата халăх творчествинче», «Сталин—вăл паянхи Ленин» тата ытти темăсемпе лекцисем ирттерме палăртнă.

Облаçри хуласемпе ялсенчи нумай ĕҫҫыннисем В. И. Ленин ҫурт-музейне пырса кураççĕ. Кунта вĕсем В. И. Ленинăн пурнăҫĕпе революциллĕ ĕçĕсем ҫинчен лекцисем итлеççĕ.

Ĕнер Владимир Ильич ҫурт-музейĕнче тата В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн филиалĕнче 2 пин ҫынна яхăн пулнă.

В. И. Ленинăн Тĕп музейĕнче

Музей директорĕпе А. П. Косульников юлташпа калаçни

Совет халăхĕ, прогрессивлă пĕтĕм этемлĕх большевиксен партине тата тĕнчере пĕрремĕш социализмлă государствăна туса хунă Владимир Ильич Ленина—тĕнчери ĕҫҫыннисен аслă ҫулпуҫне тата учительне чунтан-чĕререн хисеплесе асăнаççĕ.

Вунпилĕк ҫул ҫурă каялла Мускавра, Хĕрлĕ Площадьпе юнашар, И. В. Сталин юлташ хушнипе тата унăн пуçарăвĕпе В. И. Ленинăн Тĕп Музейне уçнă. Музей ленинизм идейисене пропагандăлас тĕлĕшпе пысăк ĕҫсем тăвать, ĕҫҫыннисен анлă массине большевикла партин паттăр историне вĕренме пулăшать.

Музей залĕсенче ҫак ҫулсем хушшинче вунпĕр миллион ҫын ытла пулнă. Кунта пĕтĕмпе 100 пин лекци ытла вуланă. Музея пыракансем хушшинче пирĕн аслă Тăван ҫĕршыври мĕнпур республикăсен, крайсен тата облаçсен представителĕсене курма пулать. Вĕсем—тĕрлĕ национальноçсен ҫыннисем. Вĕсем хушшинче ватă е ҫамрăк рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийĕ, вĕренекенсем, Совет Ҫарĕн воинĕсем, пропагандистсем тата политшкулсемпе кружоксен руководителĕсем.

В. И. Ленин музейĕ ҫинчен пирĕн ҫĕршыв кăна мар, ытти ҫĕршывсенче те лайăх пĕлеççĕ. Юлашки виçĕ ҫул хушшинче кăна музея ытти ҫĕршывсенчен килнĕ 20 пин ҫын пырса курнă.

Тĕп музейра Владимир Ильичăн пурнăҫне тата революциллĕ ĕçĕсене, В. И. Ленинпа И. В. Сталин хушшинчи аслă туслăха сăнласа паракан экспонатсем 7 пин ытла. Экспонатсем хушшинче—В. И. Ленин тата И. В. Сталин ҫырнă произведенисене малтанхи хут кăларнă кĕнекесем, ӳкерсе илнĕ алçырăвĕсем, Владимир Ильичăн япалисем, В. И. Ленина ĕҫҫыннисем панă парнесем, художниксен, скульпторсен паллă ĕçĕсем тата халăх творчествин паха произведенийĕсем.

Музейра «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» тăрăх йĕркеленĕ материалсем ВКП(б) историне, В. И. Ленинпа И. В. Сталин пурнăҫне тата вĕсен революциллĕ ĕçĕсене вĕренекен кашни ҫыншăн ҫав тери пысăк пуянлăх пулса тăраççĕ.

Музейри документсем, совет влаçĕ мир ҫинчен пирвайхи хут кăларнă декретран пуçласа В. И. Ленин тата И. В. Сталин миршĕн, халăхсем хушшинчи туслăхшăн пĕрмаях ҫине тăрса кĕрешни ҫинчен каласа параççĕ. Ҫĕнĕ экспонатсем Совет государствин тулашри мирлĕ политикине, пĕр-пĕрне хирĕçле икĕ система пĕрле пурăнма пултарнине кăтартса параççĕ.

Вунвиççĕмĕш залри ҫĕнĕ документсем хушшинче пирĕн ҫĕршывра радиотехникăна аталантарасси ҫинчен В. И. Ленин И. В. Сталин юлташ патне ҫырнă ҫыру пур. Кунтах 1921 ҫулти январĕн 24-мĕшĕнче «И. П. Павлов академикпа унăн сотрудникĕсем валли ăслăлăх ĕçне туса пыма кирлĕ условисем ҫинчен» Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени пур. Ҫак постановлени ҫине Владимир Ильич алă пуснă.

«Ленинизм» залĕнче—В. И. Ленин тата И. В. Сталин ҫырнă произведенисене тĕнчери тĕрлĕ чĕлхесемпе пичетлесе кăларнă кĕнекесем. Ҫак зал пуянланса пырать. Кунта В. И. Ленин Сочиненийĕсен томĕсем (тăваттăмĕш хут кăларни) тата ССР Союзĕнчи халăхсен тата халăх демократи ҫĕршывĕсенчи, халăхсен чĕлхипе кăларнă И. В. Сталин Сочиненийĕсем. Ҫакăнтах И. В. Сталин ҫырнă «Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем» произведени пур.

Юлашки ҫулсенче музей искусство произведенийĕсемпе пуянланчĕ. Ҫав произведенисем хушшинче П. Розин художникăн «В. И. Ленин тата И. В. Сталин Разливра» ятлă пысăк картинĕ, В. Серов художникăн «Хресченсем В. И. Ленин патĕнче» ятлă картинĕ, В. Бялыницкий-Бируля художник Владимир Ильич юлашки ҫулсенче пурăннă Горки патĕнчи вырăнсене кăтартса ӳкернĕ картинăсем. Залсенчен пĕринче—В. И. Ленин тата И. В. Сталин сăнĕсене Н. Томский шурă мрамортан касса тунă скульптурăсем.

Ҫĕнĕ экспонатсенчен пĕри—Федоси артелĕнчи художник М. Пашинин ӳкернĕ В. И. Ленин портречĕ. Кунтах А. Ремизов мамонт шăмминчен касса тунă В. И. Ленин тата И. В. Сталин барельефĕсем.

Ленинизм идейисене пропагандăлас тĕлĕшпе В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн филиалĕсем пысăк ĕç тăваççĕ. Владимир Ильич ҫуралнă хулара — Ульяновскра, ҫавăн пекех Ленинградра, Киевра, Тбилисинче, Львовра, Шушенскире, Хусанта, Куйбышевра, Уфара, Подольскра, Мускав патĕнчи Горки-Ленинскра В. И. Ленин ҫурчĕ-музейĕсем тунă. Мускаври Павелецки вокзалта «Траур поезчĕ» павильон уçнă. Кунта 1924 ҫулти хурлăхлă январь кунĕсенче В. И. Ленин ӳтне Герасимовская платформăран столицăна илсе пынă пăравуспа вагон упранса тăраççĕ.

Пирĕн Тăван ҫĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери ĕҫҫыннисем революцин асларан та аслă генине, наука корифейне, пĕтĕм тĕнчери ĕҫҫыннисен ҫулпуҫне тата учительне Владимир Ильич Ленина вĕçĕ-хĕррисĕр юратаççĕ.

Ленин кунĕсенче Тĕп музей залĕсене тата унăн филиалĕсене пыракансен йышĕ уйрăмах ӳсрĕ.

Ĕҫҫыннисен аслă ҫулпуçĕсен В. И. Ленин тата И. В. Сталин идейисемпе хĕҫпăшалланса, совет ҫыннисем кулленхи ĕç валли тата пирĕн ҫĕршывра коммунизм ҫĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме вăй-хăват пухаççĕ. Ленинизм прогрессивлă пĕтĕм этемлĕхĕн миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешмелли ялавĕ пулса тăчĕ. (ТАСС).

В. И. Ленинăн Хусанти ҫурт-музейĕнче

Хусанта, унăн историйĕ 500 ҫул ытла шутланакан хулара, истори тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăнсем нумай. Ҫав вырăнсенчен чи хаклисем Владимир Ильич Ленин ячĕпе ҫыхăнса тăраççĕ.

Ĕлĕкхи Первая гора, хальхи Ленин урамĕнче 86-мĕш №-лĕ ҫуртăн килкартишĕнче икĕ хутлă йывăç ҫурт пур. 1888—1889 ҫулсенче, Владимир Ильич Кокушкинăран ссылкăран таврăннă хыççăн, Ульяновсен ҫемйи ҫак ҫуртра пурăннă.

В. И. Ленинăн кĕçĕн йăмăкĕ Мария Ильинична активлăн хутшăннипе тата унăн кăтартăвĕсем тăрăх, 1936 ҫулта ҫак ҫурта пĕтĕмĕшпех Ильич пурăннă чухнехи пек йĕркелесе, Ленинăн Хусанти ҫурт-музейĕ туса лартнă.

Ĕҫҫыннисен аслă ҫулпуçĕн тата учителĕн Хусанта пурăннă вăхăтри пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартса паракан ҫак пĕчĕк ҫурта Хусанти тата аякран килекен ĕҫҫыннисем ҫуллен вуншар пинĕн кĕрсе кураççĕ. 1951 ҫулта ҫак музея 41.135 ҫын пырса курнă.

Курма килекенсем ҫурт-музейăн аялти хутлăхĕнчи пĕр пĕчĕк пӳлĕме уйрăмах пысăк хумханупа кĕреççĕ. Ҫак пӳлĕмре Владимир Ильич пурăннă. Кунта ытлашши япала ҫук. Сĕтел, пукан, тирпейлĕн сарса хунă тимĕр койка, стена ҫумне ҫакса хунă этажерка, унта кĕнекесем вырнаçтарса хунă. Сĕтел ҫинче—лампа, чернильница.

Халĕ, Ленин кунĕсенче, ҫак ҫурт-музея курма пыракансен йышĕ уйрăмах нумай. Кунта рабочисем, вĕренекенсем, студентсем, служащисем, пĕчĕк ачасене ҫавăтнă хĕрарăмсем вĕçĕмсĕр кĕреççĕ.

Музея курма пынă ҫынсем ăша кăмăллă та хумхантаруллă сăмахсем пиншер ҫырса хăварнă. Ҫавăн пек ҫырса хăварнă хĕрӳллĕ сăмахсен кĕнеки темиçе том пулнă ĕнтĕ.

«Ҫурт-музей аслă ҫулпуҫăн сăнарне питех те лайăх кăтартса парать»—тесе ҫырать Мускавран килнĕ профессор А. П. Смирнов, СССР Наукăсен академийĕн Куйбышеври экспедицийĕн руководителĕ.

Чăваш республикинчи Ҫĕмĕрле хулинчен килнĕ рабочи М. Плетенков, ҫак уйăхра ҫурт-музейра пулса, ҫапла ҫырса хăварнă: «Ҫак таса ҫурта эпĕ ĕмĕрех асра тытса тăрăп. Эпĕ В. И. Ленинăн произведенийĕсене тата та ытларах тăрăшса вĕренме тытăнăп».

«Ҫак паха музея килсе курни мана пирĕн аслă учитель Владимир Ильич Ленин туса панă совет государствине, пире коммунизм патне ертсе пыракан большевиксен партине тата та ытларах хĕрӳллĕхпе юратма вĕрентет»,—тесе ҫырать Совет Ҫарĕн сержанчĕ А. Подобед юлташ.

Ҫурт-музейăн отзывсем ҫырса хăвармалли кĕнеки ҫине ҫавăн пек кĕске тăйлă сăмахсем ҫырса, кунта килсе куракан вуншар та вуншар пин ҫынсем В. И. Ленина, И. В. Сталина, большевиксен партине хăйсем пĕр вĕçĕмсĕр парăнса тăнине кăтартса параççĕ.

В. И. Ленинăн Хусанти ҫурт-музейне организациленĕренпе кунта ҫур миллион ҫын ытла килсе курнă. Аслă ҫулпуҫăн вилĕмсĕр ĕçĕсемпе тăрăнрах паллашас ĕмĕтпе кунта Совет Союзĕнчи тĕрлĕ облаçсенчен, крайсенчен, республикăсенчен ĕҫҫыннисем тăтăшах килсе кураççĕ. Ҫакă вăл паллă та ĕнтĕ, мĕншĕн тесен Ленинăн вилĕмсĕр ĕçĕсем пирĕн ҫĕршывра коммунизм тăвассишĕн кĕрешекен ĕҫҫыннисене ĕçре Ленин пек харсăр, ҫирĕп, чăтăмлă тата хăюллă пулма вĕрентеççĕ.

А. ФЕДОРОВ.

Хусан.

ЛЕНИН ÇИНЧЕН

И. В. Сталин юлташ 1924 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче Кремльри курсантсен вечерĕнче каланă сăмах

Юлташсем! Мана—сирĕн кунта Ленин çинчен аса илес калаçмалли вечер тунă, терĕç, мана вара çак вечера доклад тăвакансенчен пĕри пулма чĕннĕ, терĕç. Ленин ĕçĕсем çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе доклад туса пама кирлĕ мар пулĕ, тесе шутлатăп эпĕ. Ленин мĕнле çын тата мĕнле деятель пулнине илсен, унăн хăшпĕр уйрăмлăхĕсене палăртакан хăшпĕр фактсене пĕлтернипе чарăнсан лайăхрах пулĕ, тесе шухăшлатăп эпĕ. Çак фактсем хушшинче, тен, шалти сыхăну пулаймĕ те, анчах вăл Ленин çинчен пĕтĕмĕшле пĕлме питех кансĕрлес çук. Кирек мĕнле пулсан та, хальхинче эпĕ сире хам малтарахра пама пулнинчен ытларах каласа пама пултараймастăп.

Ту ăмăрткайăкĕ

Пирвайхи хут эпĕ Ленинпа 1903 çулта паллашрăм. Чăн та, ку паллашу пĕр-пĕринпе курнăçса мар, пĕр-пĕрне курмасăр, çырусем çӳретни урлă пулчĕ. Анчах вăл паллашу манра нихăçан манми туйăм хăварчĕ, çав туйăм эпĕ партире ĕçлеме пуçланăранпа пĕрре те ман асран каймарĕ. Эпĕ ун чухне Çĕпĕрте ссылкăра пурăнаттăм. Ленинăн 90-мĕш çулсем вĕçĕнчи, уйрăммăнах унăн 1901 çул хыççăнхи, «Искра» хаçат тухма пуçланă хыççăнхи, революциллĕ ĕçхĕлĕпе паллашни мана Ленин пирĕншĕн ахаль çын мар иккенне ĕненесси патне илсе пычĕ. Ун чухне вăл маншăн пулсан партин ахаль руководителĕ пулман, вăл чăннипех те ăна пуçарса яраканни пулнă, мĕншĕн тесен пĕр вăл кăна пирĕн партин ăшĕнчи тупсăмне тата çийĕнчех тытăнса тумалли ĕçĕсене ăнланса тăнă. Ăна эпĕ пирĕн партин ытти руководителĕсемпе танлаштарса пăхсан, мана яланах Ленинпа пĕрле ĕçлекенсем—Плеханов, Мартов, Аксельрод тата ыттисем—Ленинран нумай кайра тăнăн туйăнатчĕç. Ленин, вĕсемпе танлаштарсан, руководительсенчен пĕри çеç мар, вăл чи аслă сăнарлă руководитель, кĕрешӳре хăрама пĕлмен тата партие вырăс революциллĕ движенин çӳресе курман çулĕсемпе малалла хăюллăн ертсе пыракан ту ăмăрткайăкĕ пек туйăнатчĕ. Çак туйăм ман чĕреме çав тери тарăн кĕрсе ларнă пирки, эпĕ ун çинчен хамăн пĕр çывăх юлташăм патне, ун чухне эмиграцире пурăнакан-скер патне, çыру çырса яма кирлине туйрăм, ăна та хăйĕн шухăшне пĕлтерме ыйтрăм. Пăртак вăхăт иртсен, Çĕпĕрте ссылкăра пурăннă чухне ĕнтĕ,—ку вăл 1903 çул вĕçĕнче пулчĕ,—эпĕ хамăн тусăмран вĕçĕмсĕр савăнса ырласа çырнă ответ тата Ленинăн просто çырнă, анчах та тарăн шухăшлă çырупе илтĕм, ман тусăм ăна манăн çырупа паллаштарнă мĕн. Ленин çырăвĕ пысăках марччĕ, анчах вăл çыру пирĕн партин практикине хăюллăн, ним хăрамасăр критиклетчĕ тата партин çывăх тапхăрти ĕçĕн пĕтĕм планне уççăн та кĕскен кăтартса паратчĕ. Питех те пăтраштарса янă япаласем çинчен çав тери просто та уççăн, кĕскен те хăюллăн çырма Ленин кăна пĕлнĕ,—унăн кашни сăмахĕ калать çеç мар, тĕл перет. Çав просто та хăюллă çыру эпĕ Ленин çинчен вăл пирĕн партин ту ăмăрткайăкĕ пулса тăрать тесе шутланине тата та ытларах çирĕплетрĕ. Ленинăн çав çырăвне, ватă подпольщик йăлипе, ытти нумай çырусене çунтарнă пекех, çунтарса янăшăн хама каçарма пултараймастăп.

Çав вăхăтран пуçланса кайрĕ ĕнтĕ эпĕ Ленинпа паллашни.

Мăнаçсăрлăх

Пирвайхи хут эпĕ Ленина 1905 çулхи декабрьте, большевиксен конференцинче, Таммерфорсра (Финляндире) тĕл пултăм. Эпĕ пирĕн партин ту ăмăрткайăкне, аслă çынна, политика тĕлĕшĕнчен кăна мар, тата, кирлĕ пулсан, ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен те аслă çынна курма ĕмĕтленнĕччĕ, мĕншĕн тесен манăн шухăшăмра Ленин, темĕнле яштака та илемлĕ, улăп пек курăнса тăратчĕ. Анчах вăтамран лутрарах, ахаль çынсенчен нимĕнпе те, пачах нимĕнпе те уйăрăлса тăман ахаль çыннах курсан, эпĕ питех те тĕлĕнсе кайрăм...

«Аслă çын» пухусене яланах кая юлса пымалла, пухури çынсем вăл пырса кĕрессе сывлама чарăнсах кĕтсе тăмалла, тесе шутлама хăнăхнă, çавăн пек чухне аслă çын пырса кĕрес умĕн пуху членĕсем: «тсс... шăпланăр... вăл килет», тесе сĕстереççĕ. Çав йăла мана ытлашши пек туйăнмастчĕ, мĕншĕн тесен вăл ун майлă çавăрать, хисепленине кăтартать. Анчах та Ленин, пухăва делегатсенчен те малтанрах çитсе, тăрса, пĕр кĕтессе кĕрсе ларса, конференцин ахаль делегачĕсемпе чи ахаль чухнехи пек калаçни çинчен пĕлсен, эпĕ питех те тĕлĕнсе кайрăм. Пытармастăп, мана ун чухне ку хăшпĕр кирлĕ йĕркесене хăшпĕр енчен пăснă пек туйăнчĕ.

Ленин хăйне ахаль çын пек тытни тата мăнкăмăлланманни, палăрмасăр юлма тăрăшни е, сахалран та, тӳрех куç умне курăнса тăма тата хăй пысăк вырăнта тăнине кăтартса тăма тăрăшманни,—çак паллă вăл—Ленинăн, çĕнĕ массăсен çĕнĕ çулпуçĕн, этемлĕхĕн чи тарăн «тĕпĕнчи сийĕсен» ялански йышши ахаль массисен çĕнĕ çулпуçĕн, чи вăйлă енĕсенчен пĕри пулса тăнине эпĕ кайрантарах çеç ăнланса илтĕм.

Логика вăйĕ

Çав конференцире Ленин икĕ питех те чаплă сăмах туса каларĕ: хальхи обстановка çинчен тата аграрнăй ыйту çинчен. Вĕсем, шел те ĕнтĕ, усранса юлман. Çак сăмахсем пĕтĕм конференцие тăвăллăн хаваслантарса янă çулăмлă сăмахсем пулчĕç. Çав тери хăватлă ĕнентерсе калани, шухăшсене просто та уççăн сăлтавлани, кĕске тата пурте ăнланмалла фразăсем, сăрласа калани çукки, хăлаçланманни тата, хавхалантарас тесе, янравлă сăмахсем каласа тĕлĕнтерме хăтланманни,—çаксем пурте Ленин сăмахĕсене «парламентсенчи» ялански йышши ораторсен сăмахĕсенчен уççăнах уйăрса тăраççĕ.

Анчах мана ун чухне Ленин сăмахĕсен çав енĕ мар тыткăна илчĕ. Мана Ленин сăмахĕсенчи логикăн çĕнсе илме çук вăйĕ тыткăна илчĕ, çакă вăл пăртак типĕрех, анчах та аудиторие пĕтĕмпех çавăрса илет, ăна майĕпен электризацилет те кайран ăна, çынсем калашле, ним юлмиччен тыткăна илет. Эпĕ ун чухне делегатсенчен нумайăшĕ çапла каланине астăватăп: «Ленин сăмахĕсенчи логика—вăл пурне те тума пултаракан темĕскерле çирĕп аллăсем пек, вĕсем сана хĕскĕчĕсемпе пур енчен те ярса илеççĕ те, вĕсен ытамĕнчен вара вĕçерĕнсе тухма май çук: е парăн, е пĕтĕмпех пĕтсе ларма килĕш».

Ленин сăмахĕсенчи çав уйрăмлăх унăн ораторла ăсталăхĕн чи вăйлă енĕ пулса тăрать, тесе шухăшлатăп эпĕ.

Нăйкăшмасăр

Иккĕмĕш хут эпĕ Ленина 1906 çулта пирĕн партин Стокгольмри съездĕнче тĕл пултăм. Пурте пĕлеççĕ, çав съездра большевиксем сахаллăн тăрса юлнă, вĕсем поражени тӳснĕ. Эпĕ ун чухне Ленина парăннă çын ролĕнче пирвайхи хут куртăм. Вăл пĕрре те поражени тӳснĕ хыççăн нăйкăшакан, хуйхăракан çулпуççем евĕрлĕ пулмарĕ. Йăлтах урăхла, поражени тӳсни Ленина хăйĕн майлисене çĕнĕ кĕрешӳсем патне, пулас çĕнтерӳсем патне кайма хавхалантаракан вăй-хăват чăмăрĕ туса хучĕ. Эпĕ Ленин поражени тӳсни çинчен калатăп. Анчах мĕнле поражени пулнă-ха вăл? Ленина хирĕç пыракансем çине, Стокгольмри съездра çĕнтерисем çине—Плеханов, Аксельрод, Мартов тата ыттисем çине пăхасчĕ: вĕсем чăн-чăн çĕнтерӳçĕсем евĕрлĕ питех те сахăл пулнă, мĕншĕн тесен Ленин меньшевизма ним хĕрхенмесĕр критиклĕнипе вĕсем çинче, çынсем калашле, пĕр чĕрĕ вырăн та хăварман. Эпир, делегат-большевиксем, пĕр ушкăна кĕпĕрленсе тăрса, Ленин çине пăхса, унран канаш ыйтса тăнине астăватăп эпĕ. Хăшпĕр делегатсен сăмахĕсенче ывăнни, хуйăха ӳкни палăратчĕ. Çавăн пек сăмахсене хирĕç Ленин шăлне çыртса епле çивĕч калани аса килет: «Ан нăйкăшăр, юлташсем, эпир пурпĕрех çĕнтеретпĕр, мĕншĕн тесен эпир тĕрĕс тăватпăр». Нăйкăшакан интеллигентсене курайманни, хамăр вăйсем çине шанни, çĕнтерӳ тăвассине ĕненни—акă мĕн çинчен калаçрĕ ун чухне пирĕнпе Ленин. Большевиксен поражени йĕ вăхăтлăха пулни, çитес çывăх вăхăтрах большевиксем çĕнтерӳ тăвасси тупăнса тăратчĕ.

«Поражени тӳснĕ пирки нăйкăшмалла мар»—çакă вăл Ленин ĕçĕнче, ăна хăй тавра вĕçне çитиех партие парăннă тата хăйсен вăйне ĕненсе тăракан çара пĕтĕçтерме пулăшакан уйрăмлăх пулнă.

Каппаймасăр

Тепĕр съездра, 1907 çулта, Лондонра, большевиксем çĕнтерекеннисем пулса тăчĕç. Эпĕ ун чухне Ленина çĕнтерӳçĕ ролĕнче пирвайхи хут куртăм. Çĕнтерӳ ытан пĕлĕх хăшпĕр çулпуççен пуçĕсене çавăрса ярать, вĕсене пуçа каçăртакан тата каппаякан туса хурать. Пурнинчен ытларах çавăн пек чухне çĕнтерĕве уявлама, çĕнтерӳ тунă хыççăн лăпланса ларма пуçлаççĕ. Анчах Ленин нимĕн чухлĕ те çавăн пек çулпуççем евĕрлĕ пулман. Йăлтах урăхла, шăпах çĕнтерӳ хыççăн вăл пушшех те сыхлануллă, пушшех те асăрхануллă пулса пынă. Ленин ун чухне делегатсене епле çине тăрсах вĕрентсе калани аса килет: «пĕрремĕш ĕç—çĕнтерӳ тунипе каçса каймалла мар, каппайланмалла мар; иккĕмĕш ĕç—çĕнтерĕве алра çирĕплетсе хăвармалла; виççĕмĕш—тăшмана пĕтĕмпех пĕтерсе пăрахмалла, мĕншĕн тесен ăна хĕненĕ çеç, анчах пĕтерсе пăрахман-ха»,—терĕ вăл. «Паянтан пуçласа меньшевиксене пĕтерсе хунă», тесе вĕçкĕнленсе ĕнентерме тăрăшакан делегатсенчен питех те хытă кулатчĕ вăл. Рабочи движенире меньшевиксен çапах-ха тымарсем пуррине, вĕсене хирĕç пĕлсе кĕрешме кирлине, хамăр вăйсене ытлашши хакламасăр, тата, пушшех те, тăшмансен вăйĕсене хака хумасăр тăрассинчен пур майпа сыхланса кĕрешме кирлине кăтартса пама ăна йывăр пулман.

«Çĕнтерӳ тунипе каппаймалла мар»—çакă вăл Ленин характерĕнчи уйрăмлăх, вăл ăна тăшманăн вăйĕсене пĕлсе тĕрĕс хаклама тата пулма пултаракан кĕтменлĕхсенчен партие сыхласа тăма пулăшнă.

Принциплăх

Парти çулпуçĕсем хăйсен партин ытларахăшĕн шухăшне хакламасăр тăма пултараймаççĕ. Ытларахăшĕ вăл—вăй, ăна çулпуçĕ хисепе илмесĕр тăма пултараймасть. Ленин çавна партин кирек те хăш ытти руководителĕсенчен кая мар ăнланнă. Анчах Ленин нихăçан та уйрăммăнах, çав ытларахăшĕн принциплă никĕс çук пулсан, ытларахăшĕн тыткăнне кĕрсе ӳкмен. Пирĕн парти историнче ытларахăшĕн шухăшĕ е партин минутлăх интересĕсем пролетариатăн тĕп интересĕсене хирĕç тăнă самантсем те пулнă. Çавăн пек вăхăтсенче Ленин, шухăшласа тăмасăрах, принциплăх енне, партин ытларахăшне хирĕç татăклăнах тăнă. Ытларах та: çавăн пек вăхăтсенче вăл,—хăй час-часах каланă пек,—принциплă политика вăл пĕртен-пĕр тĕрĕс политика пулать тенине шута хурса, пурне хирĕç те тăр пĕччен тухма хăраман.

Ку тĕлĕшпе çак икĕ факт уйрăммăнах характерлă пулса тăрать.

Пĕрремĕш факт. 1909—1911 çулсенчи тапхăр, ун чухне парти, контрреволюци çĕмĕрсе тăкнă-скер, пĕтĕмпех арканса саланса пынă. Çакă вăл партие ĕненмен тапхăр, партирен интеллигентсем пĕтĕмпех кăна мар, рабочисем те хăшпĕр таран тарнă тапхăр вăрттăн ĕçлессине йышăнман тапхăр, ликвидаторствăпа ишĕлӳ тапхăрĕ пулнă. Меньшевиксем кăна мар, большевиксем те ун чухне темĕн чухлĕ фракцисемпе юхăмсенчен, нумай чухне рабочи движенирен татăлса кайнăскерсенчен, тытăнса тăнă. Пурте пĕлеççĕ, шăпах çав тапхăрта ĕнтĕ вăрттăн ĕçлессине пĕтĕмĕшпех пăрахас тата рабочисене легальнăй, либеральнăй столыпинла партие организацилес идея шăтса тухнă. Партин саланса кайнă тата çĕмĕрсе пĕтернĕ вăйĕсене тĕлĕнмелле чăтăмлăхпа, халиччен пулман тимлĕхпе пухса, рабочи движени ăшĕнче партие хирĕçле мĕнпур тата пур тĕрлĕ юхăмсене хирĕç кĕрешсе, партилĕх ялавне халиччен пулман паттăррăн çĕклесе тытса тăрса,—Ленин анчах ун чухне пурне те ярса илнĕ чире парăнман, партилĕх ялавне çӳлте тытса тăнă пĕртен-пĕр çын пулнă.

Пурте пĕлеççĕ, кайран вара партилĕхшĕн пынă тавлашура Ленин çĕнтерекенни пулнă.

Иккĕмĕш факт. 1914—1917 çулсенчи тапхăр, империализмлă вăрçă сарăлса кайнă тапхăр, ун чухне социал-демократла тата социалистла партисем пурте, е пурте тенĕпе пĕрех, патриотизмла сĕрĕме парăнса, хăйсене тăван çĕршывсенчи империализм аллине тарса панă. Çакă вăл II-мĕш Интернационал хăйĕн ялавĕсене капитал умĕнче тайнă, шовинистла хум умĕнче Плеханов, Каутский, Гэд пек çынсем те, тата ытти те тытăнса тăрайман тапхăр пулнă. Ленин ун чухне социал-шовинизма тата социал-пацифизма хирĕç татăклă кĕрешӳ пуçласа яракан, Гэдсемпе Каутскисем тăшмана сутăннине тăрă шыв çине кăларакан тата кĕске ăслă «революционерсен» çурмалăхне питлекен пĕртен-пĕр çын е пĕртен-пĕр çын тенĕпе пĕрех пулнă. Ленин хăй хыççăн пыракансем питех те сахаллăн пулнине ăнланнă, анчах çакă уншăн татăклă вырăн йышăнса тăман, мĕншĕн тесен пуласлăхлă, пĕртен-пĕр тĕрĕс политика вăл—вĕçне çитиех интернационализмлă политика пулса тăнине вăл пĕлсе тăнă, мĕншĕн тесен принципла политика пĕртен-пĕр тĕрĕс политика пулнине вăл пĕлсе тăнă.

Пурте пĕлеççĕ, çак çĕнĕ Интернационалшăн пынă тавлашура та Ленин çĕнтерекенни пулнă.

«Принциплă политика пĕртен-пĕр тĕрĕс политика пулса тăрать»—çакă пулнă ĕнтĕ Ленинăн формули, вăл пулăшнипе Ленин, революциллĕ марксизм енне пролетариатăн чи лайăх элеменчĕсене кĕрешсе илсе, «никам çĕнтерейми» çĕнĕ позицисене вăйпа туртса илсе пынă.

Массăсене ĕненни

Партисен теоретикĕсемпе çулпуçĕсем, халăхсен историне пĕлекенскерсем, революцисен историне пуçламăшĕнчен тытса вĕçне çитиех вĕреннĕскерсем, хăшпĕр чухне пĕр киревсĕр чирпе чирлеççĕ. Çав чире массăсенчен хăрани, массăсен творчествăллă пултарулăхне ĕненменни теççĕ. Çакна пула хăшпĕр чухне, çулпуççем массăсем çине, революцисен историне чухласах кайман, анчах киввине çĕмĕрсе çĕннине тума тивĕç массăсем çине темĕнле аристократла пăхасси çуралса тухать. Стихия ахăрса кайма пултарасран хăрани, массăсем «ытлашши нумай çĕмĕрсе тăкма» пултарасран хăрани, массăсене кĕнекесем тăрăх вĕрентме тăрăшакан, анчах массăсенчен вĕренме тăрăшман аманшĕн рольне йышăнма хăтланни,—çавăн пек ĕнтĕ çав йышши аристократизмăн никĕсĕ.

Ленин çавăн пек çулпуççенчен пĕтĕмпех урăхла пулнă. Пролетариатăн творчествăллă вăйĕсемпе унăн класлă сисĕмлĕхĕн революциллĕ тивĕçлĕхне Ленин пек тарăн ĕненекен революционера эпĕ урăх пĕлместĕп. «Революци йĕркесĕрлĕхне» тата «массăсем хăйсем ăссĕнех хăтланнине» критиклекен мăнкăмăллă çынсене Ленин пек, нимĕн хĕрхенмесĕр, питлеме пĕлекен революционера эпĕ урăх пĕлместĕп. Пĕр калаçу вăхăтĕнче юлташсенчен пĕри: «революци хыççăн тивĕçлĕ йĕрке пулса тăмалла», тенине хирĕç Ленин ответлени аса килет, вăл тăрăхласа кулса: «Революционер пулас текен çынсем историри чи тивĕçлĕ йĕрке революци йĕрки пулса тăнине манса каяççĕ пулсан, питех те шел», терĕ.

Çакăнтан вара—массăсем çине çиелтен пăхма тата вĕсене кĕнекесем тăрăх вĕрентме тăрăшакан мĕнпур çынсене Ленин пачах хисеплеменни килнĕ. Çакăнтан вара—Ленин ывăнма пĕлмесĕр вĕрентни: массăсенчен вĕренмелле, вĕсем тăвакан ĕçсене ăнланса илмелле, массăсен кĕрешĕвĕн практикăллă опытне тĕплĕн тĕпчесе вĕренмелле, тесе вĕрентни килнĕ.

Массăсен творчествăллă вăйĕсем çине шанса тăни—çакă пулнă ĕнтĕ Ленин ĕçĕнчи уйрăмлăх, вăл вара стихийăна ăнланса илме тата унăн движенине пролетариллĕ революци çулĕпе яма ăна май панă.

Революци генийĕ

Ленин революцишĕн çуралнă çын пулнă. Вăл революциллĕ çĕкленӳсен чăн-чăн генийĕ тата революцие ертсе пырас ĕçĕн асларан та аслă мастерĕ пулнă. Ленин хăйне революциллĕ кисренӳсен саманинче ирĕклĕн те савăнăçлăн туйнă пек урăх нихăçан та туйман. Çакăнпа эпĕ: Ленин пур тĕрлĕ революциллĕ кисренӳсене те пĕр пекех ырланă е вăл яланах тата кирек мĕнле условисенче те революциллĕ çĕкленӳсемшĕн тăнă, тесе пачах каласшăн мар. Нимĕн чухлĕ те. Çакăнпа эпĕ, Ленин малашне мĕн пулассине гениллĕ курса тăни революциллĕ çĕкленӳсен вăхăтĕнче нихăçанхинчен те туллирех тата уççăнрах палăрнă, тесе çеç каласшăн. Революциллĕ çаврăнусен кунĕсенче вăл чăннипех те чечекленнĕ, ярăççăн куракан пулса тăнă, классен движенине тата революцин пулма пултаракан кукăр-макăрĕсене малтанах пĕлсе, вĕсене ывăç тупанĕ çинчи пек курса тăнă. Пирĕн партин çыннисем хушшинче ахаль мар ĕнтĕ: «Ильич революци хумĕсем çинче, шывра пулă ишнĕ пекех, ишме пĕлет», тесе калаççĕ.

Çакăнтан вара—Ленинăн тактикăллă лозунгĕсен «тĕлĕнмелле» уçăмлăхĕ тата революциллĕ тĕллевсен «пуçа çаврăнмалла» хăюлăхĕ килет.

Ленинăн çак уйрăмлăхне палăртса паракан, уйрăммăнах характерлă икĕ факт аса килет.

Пĕрремĕш факт. Октябрьти переворот умĕнхи тапхăр, ун чухне миллион рабочисем, хресченсем, салтаксем, тылри тата фронтри кризис хĕтĕртсе тăнипе, мир тата ирĕклĕх ыйтнă: ун чухне генералитетпа буржуази «вĕçне çити пыракан вăрçăн» интересĕсемшĕн вăрçăллă диктатура тума хатĕрленнĕ: ун чухне «общеествăллă шухăш-кăмăл» тенĕскер пĕтĕмпех, «социалистла парти» тенĕскерсем пурте, большевиксене «нимĕç шпионĕсем» тесе, вĕсене хирĕç тăнă: ун чухне Керенский большевиксен партине вăрттăнлăха хăваласа кĕртме хăтланнă,—хăшпĕр таран ĕнтĕ хăваласа кĕртме те ĕлкĕрнĕ; Австрипе Германи коалицийĕн çапах-ха дисциплинăллă, хăватлă çарĕсем пирĕн ывăнса çитнĕ тата арканса пыракан çарсене хирĕç тăнă, Хĕвеланăç-Европăри «социалистсем» вара «мĕн çĕнтеричченех вăрçас» интерессемшĕн хăйсен правительствисемпе чип-чиперех блокра тăнă...

Мĕне пĕлтернĕ-ха çавăн пек самантра восстани пуçласа яни? Çавăн пек обстановкăра восстани пуçлани вăл—нимĕнрен те хăрамасăр ĕçе тытăннине пĕлтерет. Анчах Ленин ĕçе хăюллăн тытăнма хăраман, мĕншĕн тесен вăл восстани пурпĕрех пулассине, восстани çĕнтерессине, Российăри восстани империализмлă вăрçă пĕтессине хатĕрленине, Российăри восстани Хĕвелтухăçĕнчи тертленсе çитнĕ массăсене хускатса ярассине, Российăри восстани империализмлă вăрçăран граждан вăрçи туса ярассине, восстани Советсен Республикине парассине, Советсен Республикин вара пĕтĕм тĕнчери революциллĕ движенин тĕрекĕ пулса тăрассине пĕлнĕ, хăйĕн витĕр куракан куçĕсемпе курса тăнă.

Пурте пĕлеççĕ, Ленин малашне мĕн пулассине малтанах революциллĕ курса тăни кайран вара питех те тĕрĕс пурнăçа кĕнĕ.

Иккĕмĕш факт. Октябрьти революци хыççăнхи малтанхи кунсем, ун чухне Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пăлхавçă генерала, главнокомандующи Духонина, вăрçă вăрçмашкăн чарăнма, нимĕçсемпе вăхăтлăха мир тăвасси çинчен калаçу пуçарса ямашкăн хушма хăтланса пăхнă. Çакна астăватăп: Ленин, Крыленко (пулас главнокомандующи) тата эпĕ Питĕрĕ Главнăй штаба телефон тăрăх Духонинпа калаçса татăлма кайрăмăр. Хăрушă самант пулчĕ. Духонинпа Ставка Совнаркомăн приказне пурнăçа кĕртме пачах килĕшмерĕç. Çарăн командăй составĕ пĕтĕмпех Ставка аллинче пулнă. Салтаксене илес пулсан, совет влаçне хирĕçле шухăш-кăмăллă çар организацийĕсене пăхăнса тăракан 12 миллионлă çар мĕн каласси паллă мар пулнă. Питĕрте хăйĕнче, пурте пĕлеççĕ, ун чухне юнкерсен восстанийĕ хатĕрленсе пынă. Кунсăр пуçне, Керенский Питĕр çине вăрçăпа пынă. Провод умĕнче кăшт чарăнса тăнă хыççăн Ленинăн пичĕ темĕнле тĕлĕнмелле çутăпа çуталса кайни аса килет. Вăл ĕнтĕ решени йышăнни палăрчĕ. «Каяр радиостанцине,—терĕ Ленин,—вăл пире кирлĕ ĕç тăвĕ: эпир ятарласа çырнă приказпа Духонин генерала вырăнтан кăларăпăр, ун вырăнне главнокомандующи пулма Крыленко юлташа лартăпăр та, çарăн командăй составне пăхмасăрах, салтаксене чĕнсе калăпăр, генералсене çавăрса илсе, вăрçă вăрçмашкăн чарăнма, Австрипе Германи салтакĕсемпе çыхăнма, мир ĕçне хăйсен аллине илме чĕнсе калăпăр», терĕ.

Çакă вăл «паллăмарлăха сикни» пулнă. Анчах Ленин çав «сикĕмрен» хăраман, йăлтах урăхла, вăл ăна майлă пынă, мĕншĕн тесен, çар миршĕн тăнине вăл пĕлнĕ, тата, мир патне пымалли çул çинчи пур тата пур тĕрлĕ чăрмавсене те сирсе пăрахса, вăл мир кĕрешсе илессине пĕлнĕ, мĕншĕн тесен çавăн пек меслетпе мир туса хуни Австрипе Германи салтакĕсемшĕн ахаль иртес çуккине вăл пĕлнĕ, çапла туни мĕнпур фронтсенче, вĕсенчен пĕрне те сиктерсе хăвармасăр, мир патне туртăннине вăй парассине вăл пĕлнĕ.

Пурте пĕлеççĕ, Ленин мĕн пулассине малтанах революциллĕ курса тăни кайран пĕтĕмĕшпех тĕрĕс пурнăçа кĕнĕ.

Малашне мĕн пулассине гениллĕ курса тăни, çывхарса килекен событисен шалти тупсăмне хăвăрт пĕлсе илме тата туйса илме пултарни—çакă пулать ĕнтĕ Ленинăн уйрăмлăхĕ, вăл ăна революциллĕ движенин çаврăнăвĕсенче тĕрĕс стратеги тата уçăмлă çул палăртса хума пулăшса тăнă.

«ПРАВДА» 34-мĕш №,
1924 çулхи февралĕн 12-мĕшĕ.



Мускав. Хĕрлĕ площадь. В. И. Ленин мавзолейĕ.

В. Ковригин фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Урал тракторĕсем

ЧЕЛЯБИНСК, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Челябинскри Сталин ячĕпе тăракан трактор завочĕ куллен çĕршыври машина-трактор станцийĕсене, колхозсемпе совхозсене «Сталинец-80» йышши хăватлă тракторсем ăсатать.

Тракторсем туса кăларас ĕç çине Владимир Ильич Ленин уйрăмах тимлĕ пăхнă. Вăл çапла каланă:

«Эпир ыранах 100 пин первокласнăй тракторсем пама пултарнă пулсан, вĕсем валли бензин пама, вĕсем валли машинистсем пама пултарнă пулсан (эсир лайăх пĕлетĕр, ку халĕ фантази кăна-ха), вăтам хресчен çапла каланă пулĕччĕ: «эпĕ коммунишĕн» (тепĕр майлă каласан, коммунизмшăн)»,

1919 çулта фантази пулни халĕ ĕнтĕ пурнăçа кĕнĕ. Пирĕн халăх, большевиксен партийĕ, И. В. Сталин юлташ ертсе пынипе Ленин çулĕпе пырса, хăватлă промышленность туса хучĕ. Çакă вара ялхуçалăхне техникăпа хĕçпăшаллантарма май пачĕ. Колхозсен уй-хирĕсенче вуншар пин хăватлă тракторсем ĕçлеççĕ.

Челябинскри тракторсем туса кăларакансем В. И. Ленина чун-чĕререн хисеплесе асăнаççĕ. Халĕ цехсенче, рабочисем пурăнакан общежитисенче аслă çулпуçăн тата учителĕн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕ çинчен калаçусем иртереççĕ. Агитаторсем трактор завочĕн çитĕнĕвĕсем çинчен каласа параççĕ.

Халĕ тракторсене, малтанхипе танлаштарсан, чылай хăвăртрах туса кăлараççĕ, иртнĕ çулта машинăсене икĕ хута ытларах ĕçлеттермелле тунă. Производство механизациленнĕ çемĕн механизациленсе, пиртĕ паха техникăпа хĕçпăшалланса пырать.

28 ÇУЛ ЛЕНИНСĂР, СТАЛИН ЮЛТАШ ЕРТСЕ ПЫНИПЕ— ЛЕНИН ÇУЛĔПЕ

1924 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче революцин аслă генийĕ, большевиксен партийĕн никĕсне хываканĕ тата çулпуçĕ, тĕнчере малтанхи социализмлă государство тунă çын, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă учителĕ тата тусĕ Владимир Ильич Ленин вилсе кайнă.

Владимир Ильич Ленин вилни партишĕн, рабочи класшăн, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемшĕн йывăр çухату пулчĕ.

Большевиксен партийĕн Центральнăй Комитечĕ партие, мĕнпур ĕççыннисене чĕнсе каланинче çапла çырнă:

«Пролетариат ирĕке тухассишĕн кĕрешнĕ аслă юхăм историйĕнче Маркс хыççăн нихçан та пирĕн вилсе кайнă çулпуçăмăр, учителĕмĕр тата тусăмăр пек çав тери аслă çын пулманччĕ-ха. Пролетариатăн мĕнпур аслă та паттăр енĕсем—хăюллă ăсхакăл, тимĕр пек çирĕп, никам хуçаймин, çине тăракан, пурне те çĕнтерекен кăмăл, чуралăхпа пусмăра çав тери хытă курайманни, тусене хускатакан революциллĕ хастарлăх, массăсен творчествăллă вăйĕсем çине вĕçĕмсĕр шанса тăни, калама çук аслă организациллĕ гений,—пурте вĕсем Ленинра çав тери лайăх пĕтĕçсе тăнă, унăн ячĕ хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçне çити, кăнтăртан çурçĕре çити çĕнĕ тĕнче символĕ пулса тăчĕ».

Çак пысăк çухату йывăрлăхне ăнланса илсе, большевиксен партийĕпе пĕтĕм совет халăхĕ хăйсен речĕсене партин ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕ тавра, Ленинăн шанчăклă ученикĕ, унăн сывăх соратникĕ тата тусĕ, Ленинăн вилĕмсĕр ĕçне малалла туса пыракан аслă çулпуç—Иосиф Виссарионович Сталин тавра тата тачăрах пĕтĕçрĕç.

1924 çулхи январьти хурлăхлă кунсенче Сталин юлташ Советсен Пĕтĕм Союзри II-мĕш съездĕнче большевиксен партийĕпе пĕтĕм совет халăхĕн ячĕпе тĕнчери пролетариат çулпуçĕпе учителĕ В. И. Ленин тупăкĕ умĕнче историллĕ тупа турĕ. Сталин юлташ: парти членĕн аслă ятне çÿлте тытма тата тасалăхра усрама; пирĕн парти пĕрлĕхне куç шăрçине сыхланă пек сыхласа усрама; пролетариат диктатурине сыхласа усрама тата тĕреклетсе пыма; рабочисемпе хресченсен союзне мĕнпур вăйпа тĕреклетсе пыма; пирĕн çĕршыври халăхсен тăванла туслăхне çирĕплетсе пыма; республикăсен союзне тĕреклетсе тата аслăлатса пыма; пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ флота çирĕплетсе пыма; пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен союзне тĕреклетсе тата аслăлатса пыма тупа турĕ.

В. И. Ленин вилнĕ хыççăн большевиксем партийĕпе Совет государстви мĕнпур ĕçсене Ленин ĕçне гениллĕ малалла илсе пыракан Сталин юлташ ăслă ертсе пынипе туса пычĕç.

Сталин вăл—паянхи Ленин. Ленин вилнĕ хыççăн, партин тата ленинизмăн тăшманĕсене хирĕç паттăр кĕрешсе, Сталин юлташ парти-пĕрлĕхне сыхласа хăварчĕ, ăна Ленин ялавĕ тавра пĕтĕçтерчĕ. Вăл пирĕн çĕршыв пурнăçне пур енĕпе те ертсе пырать. Вăл пирĕн мĕнпур çĕнтерÿсене, çĕнĕ пурнăç тăвас тĕлĕшпе мĕнпур аслă ĕçсене пуçарса, организацилесе пырать. Пролетариатăн класс кĕрешĕвĕпе пĕтĕм тĕнчери революциллĕ юхăмăн çĕнĕ опытне гениллĕ пĕтĕçтерсе, Сталин юлташ ленинизм идейисене пур енĕпе те малалла аталантарчĕ. Сталин ячĕ пирĕн Тăван çĕршывăн аслă вăйĕн символĕ. Сталин ячĕ коммунизмшăн, этемлĕх телейĕшĕн кĕрешме чĕнет.

Аслă Сталин ертсе пынипе пирĕн çĕршыври ĕççыннисем çулпуçăмăр тата учителĕмĕр В. И. Ленин хушса хăварнисене пурнăçа кĕртрĕç. Ленин çулĕпе пырса, Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕ социализм турĕ, ку вăл—ленинизм идейисем пурнăçланни пулать. Историре чи кĕске срокра пирĕн Тăван çĕршыв, патша чухне кая юлнă, аграрлă çĕршыв пулнăскер, хăватлă индустриллĕ-колхозлă держава пулса тăчĕ. Çĕршыва индустриализацилес тата ялхуçалăхне коллективизацилес ĕçе ăнăçлă пурнăça кĕртни Совет Союзĕнче эксплуататорла классене, çынна çын эксплуатацилессине пĕтерме май пачĕ. Ленин—Сталин партийĕ халăх массисен пурнăçне пĕрмаях лайăхлатса, культурăна ÿстерсе пырать. Пирĕн çĕршывра социализм çĕнтернĕ ниçкĕс çинче малалла илсе пыракан хăватлă вăйсем—совет обществин моралĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ, халăхсен туслăхĕ, совет патриотизмĕ ÿссе сарăлчĕç.

Сталин юлташ хавхалантарса ертсе пынипе совет халăхĕ хăйĕн историллĕ çĕнтерĕвĕсене тĕнчери империализмран хÿтĕлесе хăварчĕ, фашизма хирĕç вилĕмлĕ кĕрешÿре çĕнтерÿ турĕ, гитлерла Германипе империалистла Японие çĕмĕрсе тăкрĕ, вăрçă хыççăнхи пĕрремĕш пилĕк çуллăх плана пурнăçа кĕртрĕ, халĕ коммунизм тумалли сталинла аслă программăна пурнăçа кĕртсе пырать.

В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ куна совет халăхĕ политика, хуçалăх тата культура пурнăçĕнче пур енĕпе те историллĕ çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе, рабочисен, хресченсен, интеллигенцин ĕçпе политикăллă çĕкленĕвĕ вăйланса пынă условипе паллă тăвать.

Пирĕн çĕршывра наука, литература тата искусство чечекленсе ÿсрĕç, вĕсем халăхшăн ĕçлесе тăраççĕ. Иртнĕ çул халăха вĕрентме тухакан расходсем 53 миллиард тенкĕ е государство бюджечĕн 13 процентчĕ чухлĕ пулнă. Пуçламăш шкулсемпе вăтам шкулсенче, техникумсенче тата ытти шкулсенче хальхи вăхăтра 37 миллион çын ытла вĕренет. 1940 çулта аслă шкулсенче 812 пин студент вĕреннĕ пулсан, 1950 çулта 1.247 пин студент вĕреннĕ. Вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхра халăх хуçалăхĕ аслă шкултан вĕренсе тухнă специалистсем 652 пин çын, вăтам шкултан вĕренсе тухнă специалистсем 1.278 пин çын илчĕ. 1951 çулта аслă шкулсемпе техникумсенчен 463 пин çамрăк специалист вĕренсе тухнă. Рабочисемпе служащисен виçĕ пайĕнчен пĕр пайне яхăн курссенче, шкулсенче, техникумсенче, аслă шкулсенче заочно тата каçхипе вĕренеççĕ.

Коммунизмлă общество тăвас ĕçре пирĕн çĕршывра ĕçпе наука вăйĕсем пĕрлешсе тăраççĕ. Тĕнчере чи малта пыракан совет наукин малалла аталанса, чечекленсе ÿсме кирлĕ условисем пурте пур. Наукăпа тĕпчев учрежденийĕсен хисепĕ, 1940 çулхипе танлаштарсан, 1,5 хут. вĕсенче ĕçлекен наука работникĕсен хисепĕ 2 хута яхăн ÿснĕ. Пирĕн çĕршывра наука, техника тата культура пĕрмаях ÿсе пынипе наука, техника, литература тата искусство тĕлĕшпе паллă ĕçсем тунăшăн, çавнашкалах промышленноçпа ялхуçалăхĕнче изобретенисем тунăшăн, ĕçе лайăхлатса пынăшăн кашни çулах Сталинла премисем пани те уççăн кăтартса парать.

Совет халăхĕ, Ленин—Сталин партийĕ хавхалантарса пынипе, хăйĕн пĕтĕм творчествăллă вăйне коммунизм тăвас ĕçе парать. 1950 çулта совет халăхĕ коммунизмăн аслă стройкисене—тĕнчери чи пысăк гидростанцисем, каналсем тата çĕре шăвармалли системăсем тума тытăнчĕ. Атăл, Днепр, Аму-Дарья тата Дон çинчи калама çук пысăк строительство коммунизмăн материально-техникăлла никĕсне тăвас ĕçри çĕнĕ тапхăр пулса тăрать. 5—6 çул хушшинче Атăл, Днепр, Аму-Дарья çинче тĕнчери чи хăватлă гидротехника сооруженийĕсем: çулсерен 22,5 миллиард киловатт-сехет электроэнерги туса тăракан 5 электростанци, 9 калама çук пысăк пĕве, 3 пин километр тăршшĕ тĕп каналсем тата 8 пысăк водохранилище пулса тăраççĕ. Кăçал, 1952 çулта, пăрахутсем çÿремелли Атăл-Дон каналĕ ĕçе кĕрет. Вăл ССР Союзĕн Европа пайĕнчи пур тинĕссене те пĕр çул-йĕр системине кĕртет.

Коммунизмăн аслă стройкисем пирĕн çĕршывăн экономика вăй-хăватне калама çук çÿле çĕклеççĕ. Çак аслă гидротехника сооруженийĕсене туни социализмран майĕпе коммунизма куçас çул çинче калама çук пысăк утăм пулса тăрать.

* * *

1951 çулта социализмлă экономикăпа культура хăватлăн малалла çĕкленсе пычĕç.

Иртнĕ çулта социализмлă промышленность вăрçăччен 1940 çулхи хисепрен икĕ хут ытларах продукци туса кăларчĕ.

Шултра промышленность уйрăмах пысăк çитĕнÿсем турĕ. 1950 çулта хура металсем туса кăларасси вăрçăччен хисепрен 45 процент иртсе кайнă. Иртнĕ çул чугун шăратса кăларасси 2 миллион та 700 пин тонна, хурçă шăратса кăларасси 4 миллион тонна яхăн, прокат туса кăларасси 3 миллион тонна ÿсрĕ. Совет Союзĕ халĕ Англи, Франци, Бельги тата Швеци пĕрле шăратса кăларнă чухлех хурçă шăратса кăларать.

Çĕр кăмрăкĕпе нефть промышленноçĕнче те калама çук пысăк çитĕнÿсем тунă. 1950 çулта пирĕн çĕршывра çĕр кăмрăкĕ вăрçăччен 1940 çулхи хисепрен 57 процент ытларах кăларнă. Çĕр кăмрăкĕ кăларас енĕпе Совет Союзĕ тĕнчере иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Çĕр кăмрăк промышленноçĕ хăвăрт аталанса пыни, хамăр çĕршыва çителĕклĕ çĕр кăмрăкĕ парса тăма кăна мар, кирлĕ резервсем тума та май пачĕ. Юлашки çулсенче нефть кăларасси пирĕн çĕршывра çултан-çулах 4,5 миллион тонна ÿсе пырать. Çапла вара Сталин юлташ кăларса тăратнă задача—кашни çул 60 миллион тонна нефть кăларасси—срокчен пурнăça кĕрет.

Пирĕн çĕршывра электрификаци çав тери анлăн сарăлса пырать. 1951 çулта 104 миллиард киловатт-сехет электроэнерги тунă, ку вăл Англипе Франци пĕрле тăвакан электроэнерги хисепĕнчен иртсе каять. 1951 çулта электроэнерги тăвасси 13 миллиард киловатт-сехет ытла ÿснĕ, ку вăл революцичченхи Российăра тунă электроэнерги хисепĕнчен 7 хут иртсе каять.

Социализмлă индустрин тĕп пайĕ пулса тăракан пирĕн машиностроени питĕ хăвăрт ÿссе, лайăхланса пырать. Вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхра машиностроени туса кăларакан продукци 1940 çулхи хисепрен 2,3 хут иртсе кайрĕ. 1951 çулта машиностроени туса кăларнă пĕтĕм продукци 1950 çулхи хисепрен 21 процент ÿсрĕ. 1951 çулта совет машиностроенийĕ 400 ытла çĕнĕ йышши машинăсемпе механизмсем туса кăларчĕ.

Сталин юлташ кăтартса панипе Совет правительстви 1951 çулта апат-çимĕçпе промышленность таварĕсене çулталăк планĕнче палăртнă хисепрен ытларах туса кăларма мерăсем йышăнчĕ. Çавна май иртнĕ çул халăх пир-авăр, сыхса тунă тумтир, атă-пушмак, аш-какай, çу, сахăр, велосипедсем, радиоприемниксем, сехетсем, фотоаппаратсем, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем, сĕтел-пукан тата ытти таварсем 1950 çулхинчен нумай ытларах илчĕç.

Техника малалла кайса пыни тата пĕтĕм халăх социализмла ăмăртса ĕçлени 1951 çулта ĕç тухăçлăхне промышленноçра 10 процент ÿстерме май пачĕ. Иртнĕ çул промышленность туса кăларнă продукцин виçĕ пайĕнчен икĕ пайне ĕç тухăçлăхне ÿстернипе туса кăларнă. Ĕç тухăçлăхне ÿстерни коммунизм çĕнтерес ĕçре чи кирли, чи тĕп вырăнта тăраканни, тесе вĕрентнĕ В. И. Ленин. Таварсен хăйне ларакан хакне йÿнетес тĕлĕшпе те çулталăкри заданÿе иртттерсе тултарнă.

1951 çулта социализмлă ялхуçалăхĕ çĕнĕ çĕнтерÿсем турĕ. Колхозсен обществăллă хуçалăхĕ малалла ÿссе çирĕпленсе пычĕ, ялхуçалăхĕ техникăпа ытларах хĕспăшалланчĕ. машина-трактор станцийĕсем колхоз производствинче ытларах ĕçлеме пуçларĕç.

Ялхуçалăхĕ 1951 çулта, 15 вăйлă трактор çине куçарса шутласан, 137 пин трактор, тырпул пухса кĕртмелли комбайнсем 54 пин. вĕсенчен 29 пин самоходнăй комбайнсем, çавнашкалах 2 миллион ытла ялхуçалăх машинисем илчĕ. Юлашки çулсенче пухса илекен тырпул хисепĕ çулсерен 7-шер миллиард пăт ытла пулса пырать. Иртнĕ çулхи çĕр мамăкĕпе сахăр кашманĕн тухăçĕ 1950 çулхи тухăçран иртсе каять. Пирĕн çĕршыв халĕ çĕр мамăкĕ туса илес тĕлĕшпе паллă çĕршывсем Инди, Пакистан тата Египет пĕрле туса илнĕ хисепрен те ытларах çĕр мамăкĕ туса илет.

Колхозсемпе совхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх хисепĕ пĕрмаях ÿссе пырать. Çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла план ăнăçлăн пурнăça кĕрет. Халĕ уй-хирсене хÿтĕлемелли вăрмансем 2 миллион гектар ытла лартса хăварнă, 13 пин ытла пĕвесемпе кÿлĕсем тунă, вăрман лартса ÿстерекен станцисем 350 ытла организациленĕ, вĕсене чи лайăх техника панă.

Совет Союзĕнче халăх хуçалăхĕ хăватлăн ÿссе пынă май ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланса тата культури ÿссе пырать. Халăх пурнăçĕ лайăхланса пынине Совет Союзĕнче наци тупăшĕ пĕрмаях ÿссе пыни, юлашки çулсенче кÿллен кирлĕ таварсен хакне тăватă хутчен йÿнетни, рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçи, колхозниксен тупăшĕсем ÿсся пыни уççăн кăтартса параççĕ.

Партипе Совет правительстви ĕççыннисен сывлăхĕшĕн куллен тăрăшаççĕ. Пирĕн çĕршывра халăха тÿлевсĕр медицина пулăшăвĕ параççĕ, курортсем, санаторисем, кану çурчĕсем, пионер лагерĕсем, ача сачĕсем тата ытти учрежденисем нумай тунă, вĕсемпе ĕççыннисем усă кураççĕ.

Большевиксен партийĕпе Совет правительствин ленинла-сталинла наци политики пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсен хуçалăхĕпе культурине чечекленсе ÿсме май пачĕ. Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕпе Совет Союзĕнчи ытти халăхсем тăванла пулăшса пынипе Чăваш АССР-ĕнчи ĕççыннисем те Совет влаçĕ вăхăтĕнче социализм тăвас ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕç. 1951 çулта пирĕн республикăн промышленноçĕ, ялхуçалăхĕ тата культури малалла ÿссе пычĕç.

Чăваш республикин промышленноçĕ 1951 çулта продукци туса кăлармалли плана иртттерсе тултарчĕ. Республикăри нумай предприятисем, вăл шутра Шупашкарти электроаппаратура завочĕ, Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ, «Большевик» завоĕ, Куславккари пурăнмалли çуртсем тăвакан завод тата ытти предприятисем те нумайăшĕ продукци туса кăлармалли çулталăкри плана срокчен тултарчĕç.

Çак фактсем пирĕн республика промышленноçĕ 1951 çулта пысăк çитĕнÿсем тунине кăтартса параççĕ. Анчах эпир уйрăм предприятисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене те курмасăр тăма пултараймастпăр. Сĕнтĕрвăрринчи судоверфь, Çĕмĕрлери комбайн пайĕсем тăвакан завод, Çĕрпÿри пир-авăр фабрики, Вăрмарти сĕтел-пукан фабрики. Улатăрти атă-пушмак фабрики тата ытти хăшпĕр предприятисем 1951 çулхи плана тултараймарĕç. Вырăнти промышленность министерствин, Апат-çимĕç промышленность министерствин, Вырăнти топливо промышленность управленийĕн предприятийĕсемпе хăшпĕр ытти предприятисем пĕтĕмпе продукци туса кăлармалли çулталăк планне тултарчĕç пулин те, хăшпĕр чи кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе плана тултараймарĕç. Республикăри промышленность предприятийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле. Кашни предприяти ĕçне лайăх йĕркелесе, 1952 çулхи плана пур йышши продукци тĕлĕшпе те тултарас пулать.

Партипе Совет правительстви яланах пулăшса пынипе пирĕн республикăри ялхуçалăхĕ 1951 çулта пысăк çитĕнÿсем турĕ. Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ социализмлă обязательствăсене пурнăçласа пырса, Чăваш республикинчи колхозсем 1951 çулта ялхуçалăх культурисене 1950 çулхинчен ытларах туса илчĕç, тырпула йĕркеллĕ пухса кĕртрĕç, государствăна тырă памалли плана срокчен икĕ уйăх маларах тултарчĕç. Республика çăм, утă, йĕтĕн, кантăр, кок-сагыз тата нумай çул ÿсекен курăк вăррисем хатĕрлемелли плана та срокчен тултарчĕ.

Республикăра обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тунă. Нумай колхозсен фермисенче выльăх-чĕрлĕх хисепĕ халĕ виçĕ çуллăх планра палăртнинчен иртсе каять.

Партипе Совет правительстви Чăваш республикинчи колхозсемпе машина-трактор станцийĕсене калама çук пысăк пулăшу пачĕ. Пирĕн республикăн ялхуçалăхне пур енĕпе те хăвăрт аталантарса пыма кирлĕ условисем пурте пур.

* * *

Совет халăхĕ хуçалăхпа культура строительствинче тунă çĕнтерÿсем рабочи класăн гениллĕ учителĕсемпе çулпуçĕсем—Ленинпа Сталин туса хунă совет обществипе государство стройĕ çав тери вăйлă та малта тăракан строй пулнине кăтартса параççĕ. Совет стройĕ халăхăн аслă вăйĕсене ирĕке кăларчĕ, эксплуатацирен ирĕке тухнă массăсен хăватлă активлăхĕпе иксĕлми пуçарулăхне пурнăç вăйĕ пачĕ.

В. И. Ленин этемлĕх историйĕнче çĕнĕ эра пуçласа ячĕ. Пирĕн саманара ленинизм идейисем çĕнтерсе пыраççĕ, вĕсем тĕнчене çĕнетсе урăхлатакан хăватлă вăй пулса тăчĕç.

«Ленинăн аслăлăхĕ, пуринчен малтан, çакăнта пулать те,—тесе кăтартса парать Сталин юлташ,—вăл, Советсен Республикине туса, çакăнпа пĕтĕм тĕнчери пусмăрти халăхсен массисене çăлăнас шанчăк çухалманнине, помещиксемпе капиталистсем пуç пулса тăрасси ĕмĕрлĕхе мăррине, ĕçлев патшалăхне ĕççыннисем хăйсен вăйĕсемпех **тума пултарнине**, ĕçлев патшалăхне пĕлĕт çинче мар, **çĕр çинче** тума кирлине кăтартса панă. Çакăнпа вăл пĕтĕм тĕнчери рабочисемпе хресченсен чĕрисене çăлăнăç шанчăкĕпе çуламлантарса янă. Ленин ячĕ мĕнпур ĕççыннисемпе эксплуатациленекен массăсемшĕн чи юратнă ят пулса тăни çакăнтан килет те ĕнтĕ» (Соч., 6 том, 48 стр.).

В. И. Ленин революци тума çуралнă. Вăл революцисем тăвакан тата революцие ертсе пыракан чăн-чăн аслă мастер пулнă. Марксистла наука методне чаплă пĕлсе, В. И. Ленин историри çĕнĕ условисенче марксизма малалла аталантарнă, пролетариатăн класс кĕрешĕвĕн çĕнĕ условийĕсенче ăна çĕнĕ опытпа пуянлатнă.

Ленинизм вăл—империализмпа пролетарилле революцисен саманинчи марксизм, çĕр чăмăрĕн улттăмĕш пайĕнче социализм çĕнтернĕ саманари марксизм. Ленинизм мĕнпур çĕршывсенчи пролетарисен интернационаллă вĕрентĕвĕ, пĕтĕм тĕнчери революциллĕ юхăм опытне пĕтĕçтерсе тăракан вĕрентÿ. Ленин—Сталин идейисем пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен революциллĕ юхăмне чĕрĕ вăй парса тăраççĕ.

Ленин ялавĕпе, коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисем ертсе пынипе халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕççыннисем çĕнтерÿ турĕç. Польша, Чехословаки, Болгари, Румыни, Венгри, Албани халăхĕсем империализм сăнчăрĕсене татса ывăтса, социализм тумалли çул çине тăчĕç. Çак çĕршывсенче пуринче те экономикăпа культура хăвăрт аталанса, ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланса пырать.

Ленин ялавĕпе аслă Китай халăхĕ çĕнтерÿ турĕ. Империализмла чуралăхран ирĕке тухса, Китай халăхĕ çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре [illegible] срокрах пысăк çитĕнÿсем тума пултарчĕ.

Демократиллĕ Германи Республикинче те хуçалăхпа культура строительстви ăнăçлăн сарăлса пырать, вăл никама пăхăнманлăхпа пĕрлĕхлĕ, демократиллĕ Германи тăвасшăн активлă кĕрешет.

Тĕнчери коммунистла юхăм хăватлăн ÿссе пыни, империализма хирĕç, хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен Вьетнам, Малайя, Бирма тата ытти колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи халăхсен наци ирĕклĕхĕшĕн ăнăçлă кĕрешни ленинизм идейисен вăйне кăтартса параççĕ.

Ленинпа Сталин капитализм тĕп пулассине нимĕнле вăй та тытса чарас çукки çинчен вĕрентнин чăнлăхĕ пирĕн вăхăтра нихçанхинчен уççăнрах курăнса тăрать. Капитализм тĕнчине хирĕçÿсем çĕмĕреççĕ, вăл хирĕçÿсем ытларах та ытларах çивĕчленсе пыраççĕ.

Капитализмăн хирĕçĕвĕсенчен тухма май тупас тесе, империалистла блок пуçлăхĕсем уççăнах фашизмпа агресси çулĕ çине, тĕнчере çĕнĕ вăрçă пуçлас çул çине тăраççĕ. Реакципе çĕнĕ вăрçă чĕртекенсен тĕп центрĕ Америка империализмĕ пулса тăрать, вăл Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç вăрçă пуçласа, пĕтĕм тĕнчере хăй пуç пулса тăрасшăн.

Америкăпа Англи империалисчĕсем хăйсен çĕршывĕсенче хут çинчи демократиллĕ ирĕклĕхсен юлашкисене те пĕтерсе пырса, фашистла йĕркесене çирĕплетсе пыраççĕ, Корейăра захватчикла вăрçă вăрçаççĕ, Китай Халăх Республикине хирĕç агрессиллĕ ĕçсем тăваççĕ, колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи халăхсене тискеррĕн пусараççĕ. Вĕсем çав тери нумай хĕçпăшал туса кăлараççĕ, агрессиллĕ Атлантика блокне сарса пыраççĕ. Хĕвеланăç Германипе Японире фашистла çарсем, тĕнчен пур пайĕсенче те çар базисем тăваççĕ, халăхсене тĕнчери çĕнĕ вăрçа кĕртсе ямă тăрăшаççĕ. Америкăри империализм чи реакциллĕ те сĕмсĕр, чи юнлă та тискер империализм пулса тăрать, тенĕ Ленин. Çак сăмахсем чăн пулнине пурнăç уççăнах кăтартса пачĕ.

Хĕçпăшал çав тери нумай туса кăларни шултра монополисене пуйтарса, ĕççынни массисене чухăна тăратса хăварать. Америкăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, США-ри монополисем 1951 çулта 60 миллиард доллар ытла, 1950 çулхинчен 1,5 хут ытларах услам илнĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче çар бюджечĕ, налогсем çав тери хăвăрт ÿссе пыраççĕ. 1937—1938 çулсенче США-ра налогсем 6 миллиард доллар пулнă пулсан, халĕ вĕсем 70 миллиард доллара çитнĕ, урăхла каласан, 12 хут ÿснĕ. Англире налогсем вăрçăченхи хисепрен 7 хут ÿснĕ.

Налогсемпе тавар хакĕсем ÿснипе пула капитализмлă çĕршывсенчи ĕççыннисен реальнăй ĕç укçи чакса пырать. Америкăри прогрессивнăй профсоюзсем шутласа пăхнă тăрăх, США-ра 1951 çулхи октябрь уйăхĕ тĕлне пурăнма кирлĕ таварсен хакĕ вăрçăченхи хисепрен 176 процент ытла ÿснĕ. Францири ĕççыннисен реальнăй ĕç укçи халĕ вăрçăченхи хисепĕн çурри чухлĕ кăна юлнă.

Капитализмлă çĕршывсенче ĕçсĕрлĕх ÿссе пырать. Пĕчĕклетсе кăтартнă цифрăсене илсен те, США-ра иртнĕ çул ĕçсĕр тăрса юлнисен хисепĕ татах 412 пин çын ÿснĕ. Пĕр Детройт хулинче кăна—Америкăри автомобиль промышленность центрĕнче—ĕçсĕр тăрса юлнă çынсем 300 пин шутланаççĕ.

Фашизм çулĕ çине тăрса, капитализмлă çĕршывсен пуçлăхĕсем полицие тĕрмесене тытса тăма ытларах та ытларах укçа параççĕ. Пурăнмалли çуртсем тума тата сывлăха сыхлама укçа памапа пĕрех. Сăмахран, США-н 1951—1952 çулсенчи бюджетĕнче тĕрмесемпе Америка охранкине—тĕпчесе йĕрлекен Федеральнăй бюрона—тытса тăма 150 миллион доллар пама палăртнă. Çав вăхăтрах халăха вĕрентме 75 миллион доллар кăна — тĕрмесемпе вăрттăн полицие паракан укçа-тенкĕрен икĕ хут сахалтарах пама йышăнать.

Америкăпа Англи империалисчĕсем миршĕн кĕрешекенсене пур майсемпе те хĕсĕрлеме, халăхсене çĕнĕ вăрçа кĕртсе яма тăрăшаççĕ. Анчах империалистсен ирсĕр планĕсем пурпĕрех путланса ларĕç. Вăрçă чĕртекен империалистсен лагерне хирĕç аслă Совет Союзĕ ертсе пыракан хăватлă демократи лагерĕ тăрать.

Совет Союзĕ ленинла-сталинла мирлĕ политикăна тытса пырать. Совет правительстви вăрçă чĕртекенсен планĕсене ывăнма пĕлмесĕр тăрă шыв çине кăларса, Америка империалисчĕсен ултав маскине сирсе пăрахать, пур майсемпе те мирлĕ пурнăça сыхласа хăварма тата тĕреклетме тăрăшать.

Совет Союзĕн мирлĕ политики совет обществипе государство стройĕн пурнăçĕнчен тухса тăрать, агрессиллĕ, захватчикла тĕллевсем уншăн ют. Совет государстви тытса пыракан мирлĕ политикăн буржуаллă пацифизмпа пĕр пекки нимĕн те çук. Совет государствин политики миршĕн активлă кĕрешме хушать. Совет Союзĕ, пур майсемпе те миршĕн кĕрешсе, социализмлă государствăн экономикăпа çар вăй-хăвачĕ çине таянса тăрать. Пирĕн çĕршыври халăхсем тăшмапла капитализмлă йĕритавралăхри совета хирĕçле ĕçсене хытă сăнаса тăраççĕ, вĕсем хăйсен социализмлă Тăван çĕршывне хÿтĕлеме, кирек мĕнле агрессора та çапса аркатма хатĕр тăраççĕ. «Вăрçă çинчен сухăрашкан çухатнă господасем çакна пĕлсе тăччăр, — терĕ Л. П. Берия «Октябрьти Аслă Социализмлă революци 34 çул тултарни» çинчен тунă докладра, — вĕсем пирĕн çĕршыв çине тапăнас пулсан, совет халăхĕ вĕсен пирĕн социализмлă Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне тапăнас ăссăр шухăшĕсене ĕмĕрлĕхех пăрахтарĕ».

Пĕтĕм Тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тăвасси çинчен чĕнсе калани çине алă пусас кампани Совет Союзĕнче пысăк çĕкленÿпе иртрĕ. Чĕнÿ çине 117.669.320 совет гражданĕ, урăхла каласан, пирĕн çĕршыври çитĕннĕ çынсем пурте алă пусрĕç.

1951 çулхи ноябрь вĕçĕнче Мускавра Миршĕн тăракансен Пĕтĕм Союзри виççĕмĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракансем патне чĕнÿ йышăнчĕ. Çак чĕнÿре пĕтĕм совет халăхĕ миршĕн кĕрешни палăрса тăрать.

Пĕтĕм тĕнчери ырă шухăшлă çынсем Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕнче совет делегацийĕ — нумай миллионлă совет халăхĕн представителĕсем Америкăпа Англири вăрçă чĕртекен империалистсен киревсĕр планĕсене тăрă шыв çине кăларнине, пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешнине чунтан ырлаççĕ.

Совет халăхĕ малти ретре тăрса миршĕн кĕрешет. Совет Союзĕн ленинла-сталинла тулашри политикине çĕр çинче пурăнакан халăхăн калама çук пысăк пайĕ ырласа кăмăллать. Совет Союзĕн мирлĕ политики тавра çĕнĕрен çĕнĕ миллионшар çынсем пĕрлешеççĕ. Миршĕн кĕрешекенсен юхăмĕ ку чухнехи чи аслă юхăм пулса тăчĕ. Мĕнпур çĕршывсенчи ĕççыннисем, мире юратакан мĕнпур халăхсем Ленин ĕçĕшĕн паттăр кĕрешекен, мир ялавне çÿлте тытса пыракан, мĕнпур малта пыракан этемлĕхĕн пурнăç интересĕсене хÿтĕлекен аслă çын—И. В. Сталин çине чунтан юратса, пысăк шанчăкпа пăхаççĕ. Вăрçă хирĕç кĕрешекен тĕнчери мĕнпур тÿрĕ кăмăллă çынсене Сталин юлташ сăмахĕсем хавхалантарса тăраççĕ: **«Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсен аллине илсен тата ăна вĕçне çитичченех хÿтĕлесе тăрсан, мир сыхланса юлĕ тата тĕреклĕнĕ».** Пилĕк аслă держава хушшинче мире хÿтĕлемелли килĕшÿ тума чĕнсе калани çине 600 миллиона яхăн çын алă пусни халăхсем, пĕр кăмăллă пулса, мир ĕçне хÿтĕлеме хатĕр тăнине кăтартса парать, тĕнчере çĕнĕ вăрçă чĕртекенсене хытах асăрхаттарать.

Империализм — капитализмăн юлашки сыпăкĕ пулни çинчен Ленинпа Сталин вĕрентни тĕрĕс пулнине пĕтĕм истори аталанăвĕ кăтартса парать. Империалистла çăткăнсем тем пекех тискерленсен те, тем пек усал ĕçсем тусан та, капитализм тĕп пулассине тытса чарас çук. «Капитализм пĕтет, — тенĕ В. И. Ленин, — хăй пĕтичен вăл вуншар та çĕршер миллион çынна тÿсме çук асап кăтартсан та, пĕтесрен ăна нимĕнле вăй та çăлса хăварас çук». Капитализм пĕтесси хальхи вăхăтра нихçанхинчен те уççăнрах палăрать. Капитализм вилĕмĕ çывхарнине, капитализм вырăнне çĕнĕ тĕнче — коммунизм тĕнчи йышăнса пынине пурнăç кунтан-кун уççăнрах кăтартса парать.

* * *

Совет халăхĕ хăйĕн пур çĕнтерĕвĕсене те большевиксен партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ хăюллă ертсе пынипе турĕ. Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă учителĕсемпе çулпуçĕсем Ленинпа Сталин пăхса çитĕнтернĕ большевиксен партийĕ вăл—пирĕн самана ăсĕ, чысĕ, совеçĕ.

Пирĕн коммунистсен партийĕпе Совет государствине Ленин ĕçĕсене гениллĕ малалла илсе пыракан Сталин юлташ ертсе пыни вăл — совет çĕршывĕшĕн, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемшĕн калама çук пысăк телей. Сталин юлташ пире коммунизм патне илсе пырать.

Пирĕн парти мĕнпур ĕçе Ленинпа Сталинăн никам çĕнтерейми вĕрентĕвĕ тăрăх туса пынипе вăйлă. Хăй пуçланса кайнăранпа пирĕн парти историри тĕрлĕ лару-тăрура тата чи йывăр условисенче те тĕрĕс çулпа пыни, яланах наука енĕпе тĕрĕс политика тытса пыни, пĕтĕм тĕнче историйĕнче паллă çĕнтерÿсем туни вăл марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕ хăватлă чĕрĕ вăй парса тăнинчен килнĕ. «Иккĕленмелли çук, — тенĕ Сталин юлташ, — эпир çак вĕрентÿ тăрăх тĕрĕс ĕçлесе пынă чухне, çак компас алăра чухне — пирĕн ĕçре çитĕнÿсем пулĕç».

Акă мĕншĕн ĕнтĕ коммунистсен те, партире тăманнисен те марксистла-ленинла теорие, большевиксен партийĕн историйĕпе теорине, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçĕсен — Ленинпа Сталинăн пурнăçĕпе ĕçне çине тăрса вĕренес пулать. Ĕççыннисене коммунистла воспитани парас ĕçе татах та вăйлатса пымалла, рабочисене, хресченсене, интеллигенцие совет патриотизмĕ, халăхсен тăванла туслăхĕ тата пролетарилле интернационализм майлă воспитани памалла, çынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкисене, национализм палăрнине, идеологири ют шухăшсене хирĕç нимĕн килĕшмесĕр кĕрешсе пымалла.

Сталин юлташ совет çыннисене Ленин хушнă пек пурăнма, ĕçлеме, кĕрешме тата çĕнтерме, Ленин каласа хăварнисене яланах асра тытса, яланах тата пур ĕçре те ленинизм ялавне шанчăклă тытса пыма вĕрентет.

Ленинпа Сталин совет çыннисене çитĕнÿсемпе нихçан та кăпăланса лармасăр, ĕçри çитменлĕхсене хăюллăн кăтартса пама вĕрентеççĕ, мĕншĕн тесен критикăпа самокритика коммунизм тăвас ĕçри çитменлĕхсемпе чăрмавсене пĕтермелли хăватлă вăй пулса тăраççĕ.

В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнă куна палăртса, пирĕн пĕтĕм вăя хамăр ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, пирĕн республика умне партин Центральнăй Комитечĕ кăларса тăратнă пысăк та ответлă задачăсене пурнăça кĕртме мобилизацилемелле. Мĕнпур предприятисенче государство планĕсене тултарассишĕн, ялхуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене вăйлатассишĕн, культурăна малалла çĕклессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, хамăрăн Тăван çĕршывăн вăй-хăватне татах та ÿстермелле.

Совет халăхĕ хăюллăн малалла пăхса, коммунизм çулĕпе шанчăклăн пырать, мĕншĕн тесен пирĕн социализмлă государствăна Ленин ĕçне гениллĕ малалла илсе пыракан аслă çулпуç тата учитель Сталин юлташ ертсе пырать.

Тĕнчери лару-тăру

ГЕРМАНИ ХАЛĂХĔ МИРПЕ ПĔРЛĔХШĔН ТĂРАТЬ

Демократиллĕ Германи Республикин Халăх Палати нумай пулмасть Наци пухăвне суйлама пĕтĕм Германири суйлавсене ирттермелли закон проектне ырларĕ. Çапла вара Халăх Палати пĕрлĕхлĕ, мире юратакан, демократиллĕ Германи государствине хăвăртрах туса хума тăрăшнине тепĕр хут кăтартса пачĕ. Закон проекчĕ пирки пурте хăйсен шухăшĕсене уççăн каласа пама пултарччăр тесе, ăна Бонри федеральнăй парламентра пăхса тухма панă, нимĕç халăхĕ хушшинче сарнă.

Халăх Палатин пуçарăвне нимĕç халăхĕн пур сийĕсем те хапăл туса йышăннă, ăна хавасланса ырланă. Çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенче пысăк митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Çав митингсемпе пухусене пынă çынсем: пĕтĕм Германири суйлавсене хăвăртрах ирттермелле, çапла майпа Германие пĕр çĕршыв туса хумалла, тесе калаççĕ. Хĕвеланăç Германири буржуалла хаçатсем те Бонри парламента Халăх Палатин сĕнĕвĕсене тимлĕ пăхса тухма чĕнеççĕ. «Франкфурте прессе» хаçат: «Кирек мĕнле лару-тăру пулсан та, Хĕвелтухăçĕпе калаçусем пуçлама тăрăшса пăхас пулать, мĕншĕн тесен Германие çĕнĕрен пĕр çĕршыв туса хурас ĕçре калаçса татăлма май килмен хирĕçÿсем çук», тесе çырать.

Çавăн пек сĕнÿсене Аденауэр «правительстви» йышăнасшăн мар. Вăл Вашингтонран хушнисене итлет. Вăл Германи пĕрлĕхне тăвасшăн пулманни çинчен систерсех калать. Ку вăл Бонри парламент «Шуман планĕ» текенскерне çирĕплетнинчен те курăнать. Çав планра Германие нумай вăхăта пайланипех хăварма, ăна тĕнчери çĕнĕ вăрçа хатĕрленес ĕçе хутшăнтарма палăртнă.

Бонри «правительство» Германи халăхне хирĕçле политика тытса пыни Хĕвеланăç Германири общественноçа тарăхтарать, общественность çав политикăна хирĕç тăрасси вăйланса пырать. Çакă Германири ĕççыннисем Бонри «правительство» членĕсем тата депутатсем патне Хĕвеланăç Германирен Америкăри çĕнĕ вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсен плацдармĕ туса хурассине хирĕç протестлесе çырусем тата пухусенче йышăннă резолюцисем нумай ярса панинчен курăнать.

Бонри влаçсем авантюрăллă политика тытса пынă пирки нимĕç халăхĕн чи анлă сийĕсем ытларах та ытларах тарăхни çинчен ĕлĕк рейхсканцлер пулнă Иосеф Вирт Бонри парламент членĕсем патне янă çыру та калать. Вăл унта «Шуман планне» йышăнас ыйтăва пăхса тухас ĕçе нимĕç халăхĕ хутшăнмасăр, çав план çинчен решени йышăнмалла мар, ун пирки решени йышăнма юрамасть», тесе çырнă.

Халĕ ĕнтĕ Бонри «правительство» Америка çарĕсем пулăшнипе кăна влаçра тăма пултарнине пурте пĕлеççĕ, ку никамшăн та вăрттăнлăх мар. Акă мĕншĕн вăл Вашингтон приказĕсене пурнăçлама, лакей пекех, хытă тăрăшать. Аденауэрăн пичетпе информаци ведомстви кăларакан «Бюллетень» çакăн çинчен пĕлтернĕ: «Шуман планне» йышăннă хыççăн Бонра васкасах «Европăри пĕр-пĕрне хÿтĕлемелли союз» (сообщество) тума, урăхла каласан, Хĕвеланăç Германири агрессиллĕ хĕçпăшаллă вăйĕсене тума хатĕрленеççĕ. Бонри «правительствăн» хăрушсăрлăх ыйтăвĕсен управленийĕ текенскерне ертсе пыракан Бланк нумай пулмасть: нимĕçсен дивизийĕсенче малтанхи вăхăтра 2.200 танк тата 1.700 çар самолечĕ пулать, тесе пĕлтернĕ.

Вăрçă хăрушлăхĕ тухса тăнине кура Германи халăхĕн массисем хăйсен речĕсене тата тачăрах пĕрлештереççĕ, çĕршыв пĕрлĕхĕшĕн, уптан çĕнĕ вăрçă плацдармĕ туса хурассине хирĕç тата хытăрах кĕрешеççĕ.

ТĔНЧЕРИ ÇĔРШЫВСЕМ ПĔР-ПĔРИНПЕ СУТУ-ИЛÿ ТĂВАС ĔÇЕ ЙĔРКЕЛЕССИШĔН

Тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвне пухма палăртнă. Ăна Мускавра ирттерме йышăннă. Çак канашлăва пухнипе Хĕвеланăçĕнчи тата Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче хытă интересленеççĕ. Капитализмлă çĕршывсенчи халăхсен тĕрлĕ сийĕсем, уйрăмах халĕ США хĕснине тÿсекенсем, ку канашлу пухăнассине питĕ интересленсе кĕтеççĕ, çавăн çинчен уççăнах калаççĕ. Хĕвеланăçĕнчи нумай çĕршывсенчи промышленноçпа суту-илÿ ĕçĕсене ертсе пыракансем тата предприятисен хуçисем чылайăшĕ ку канашлура Совет Союзĕпе, Китайпа тата халăх демократи çĕршывĕсемпе суту-илÿ тăвас ĕçе вăйлатасси çинчен сÿтсе явма шанаççĕ.

Халăхăн анлă массисен тата промышленноçпа суту-илÿ ĕçĕнчи çынсен шухăшĕсене палăртса, Голландири «Фреде» хаçат: «Хĕвелтухăçĕпе Хĕвеланăçĕ хушшинчи суту-илĕве вăйлатни тĕрлĕ нацисен пурнăçне лайăхлатма пулăшать тата тĕнчере экономикăн çирĕп никĕсне туса хума май парать», тесе çырать. Хĕвеланăç Германире тухса тăракан «Хандельсблат» хаçат Хĕвеланăç Германин халăх демократи çĕршывĕсемпе тата Демократиллĕ Германи республикипе суту-илÿ тумалли çинчен каласа, çакна палăртать: «Хĕвелтухăçпе Хĕвеланăç хушшинче суту-илÿ тăвас ĕçе вăйлатни васкаса хĕçпăшалланнинчен лайăхрах, вăл мирлĕ пурнăç тума шанчăк парать».

Пакистанри сутăçсен паллă представителĕ Джаффер суту-илÿ тăвас ĕçпе Европăна кайса килпĕ хыççăн: Хĕвелтухăç Европăри çĕршывсем «ытти çĕрти рынoксенчен лайăхрах условисемпе суту-илÿ тума сĕнме пултараççĕ», тесе каланă.

Çавăн пек çырнисене буржуалла ытти çĕршывсенче тухакан хаçатсем çинче те курма пулать. Çакна ăнланса илме йывăр мар. Америка империалисчĕсем хĕвеланăçĕнчи çĕршывсене хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсемпе суту-илÿ тума чарас тĕлĕшпе ытларах та ытларах сĕмсĕрленсе тата куçкĕретĕнех хытă тăрăшаççĕ. Нумай пулмасть США Çурçĕр Атлантика блокĕнчи çĕршывсене тепĕр хут хытă хĕснĕ, вĕсене хăйсен таварĕсене Совет Союзне тата халăх демократи çĕршывĕсене илсе кайса сутма чарнă. Анчах, «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн обозревателĕ Липпман çырнă тăрăх, асăннă çĕршывсемпе суту-илÿ тума чарни США-н «вăйсăр союзникĕсене» Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсенчен ытларах сиен кÿрет.

Францири «Монд» хаçат нумай пулмасть çакăн пирки пăшăрханса çырнă: Америка монополисчĕсем Франците рынoксемсĕр тăратса хăварнă. Кун пирки Францире экономика енĕпе пысăк йывăрлăхсем тухса тăнă. Çавна пулах «США-н агрессиллĕ политикине пурнăçлама хутшăннă Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен—Англин, Бельгин, Норвегин тата ытти çĕршывсен хăйсен çĕршывĕсене кÿрсе пынă таварсемшĕн тÿлеме укçа çитмест».

Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсенче Америка хушса тăнине хирĕç протестлесси вăйланса пырать. Унти çĕршывсенче Совет Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе суту-илÿ тăвас ĕçре йĕркеллĕ çыхăну тытма çине тăрса ыйтаççĕ.

Тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвне хутшăнма Европăри, Азири, Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи, Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче тата Латинла Америкăри çĕршывсенче активлă хатĕрленеççĕ. Çакăнтан капитализмлă çĕршывсенчи халăхсен анлă массисем, промышленноçпа суту-илÿ ĕçне ертсе пыракансемпе предприятисен хуçисем тĕнчери çĕршывсем хушшинчи суту-илÿ çыхăнăвĕсене йĕркелесшĕн пулни курăнать. «Нью-Йорк таймс» вара Америкăри промышленноçпа суту-илÿ ĕçне ертсе пыракансенчен те «хăшпĕрисем США хăйĕн представителĕсене çав канашлăва кайма пулăшмасăр йăнăш тăвать тесе шутлани» çинчен пĕлтерет.

Совет Союзĕ, Китай тата халăх демократи çĕршывĕсем яланах пур государствăсемпе те пĕртан праваллă тата икĕ енĕшĕн те усăллă йĕрке тăрăх суту-илÿ тăвас ĕçе вăйлатасшăн пулнă, вĕсем халĕ те çавăн пек суту-илĕве вăйлатассишĕн тăраççĕ.

ВĂРÇĂ ПУÇАРМА ХĔТĔРТЕКЕНСЕН КĂНТĂР-ХĔВЕЛТУХĂÇ АЗИРИ КИРЕВСĔР ĔÇĔСЕМ

Çак кунсенче Вашингтонра США, Англи тата Франци штаб начальникĕсен канашлăвĕ пулнă. Ăна вăрттăн ирттернĕ. Калаçусен итогĕсем çинчен коммюнике пичетлесе кăларман. Çапах та ют çĕршывсенчи хаçатсем çав канашлура виçĕ державăн Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири агрессиллĕ планĕсем çинчен сÿтсе явни тĕп вырăнта пулни çинчен пĕлтерчĕç. Вĕсем тĕрĕс пĕлтернĕ пирки нимĕн иккĕленмелли те çук.

Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ: канашлу мĕнле пулса иртни çинчен лайăх пĕлекен çынсем пĕлтернĕ тăрăх, унта виçĕ держава çарĕсен представителĕсем Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азире «союзниксен çарĕсен пĕрлештернĕ командованипе» тума палăртнă, тесе çырать.

Çав агентствăн Лондонри корреспонденчĕ: США çарсен халĕ асăннă системине Австралие, Çĕнĕ Зеландие тата Филиппина хутшăнтарма тăрăшать, ку командованин Çурçĕр Атлантика блокĕн организацийĕпе те, империалистсем Çывăх Хĕвелтухăçĕнчипе Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче тума шутлакан «Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи командовани» текенскерпе те çыхăнса тăмалла пулать, тесе çырнă.

Вашингтонри канашлура, тĕрĕссипе, çав çĕршывсен представителĕсен 1951 çулхи май уйăхĕнче Сингапурта пулнă канашлăвĕнче пăхса тухнă ыйтусенех малалла сÿтсе явнă. Империалистсен çак икĕ канашлăвĕнче Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири агрессие сарма США, Англи тата Франци пĕрле тăрăшасси çинчен сăмах пынă. Унта вара агрессие сарас ĕçре уйрăмах Индо-Китай çине, унти позицин «тĕп вырăнĕ» пулса тăракан çĕршыв çине ытларах çаврăнса пăхмалла, тесе каланă, Францин Вьетнамра ирсĕр вăрçă вăрçакан колонизаторĕсене малашне те пулăшма сăмах панă.

Азин çав пайĕнче напиллĕ ирĕклĕхшĕн кĕрешесси вăйланса пынинчен США, Англи тата Франци империалисчĕсем хăраса ÿкнĕ. Çавăнпа та вĕсем Инçет Хĕвелтухăçĕнчи тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири çĕршывсенчи халăхсене ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхшăн кĕрешме чарасшăн, çавна тума вĕсем хăйсен вăйĕсене пĕрлештерме хăтланаççĕ.

Çав шутпа Франци колонизаторĕсене США çар ĕçĕ енĕпех ытларах та ытларах пулăшма, Америка империалисчĕсем Вьетнамри, Малайăри тата çав районти ытти çĕршывсенчи интервенцие тÿрремĕнех хутшăнма тытăннă. Америкăри «Крисчен сайенс монитор» хаçат Вашингтонри канашлура ытти ыйтусемпе пĕрле «Индо-Китайри вăрçа Корейăри вăрçăран анлăрах сарсан, унта çарсем нумай илсе пырсан, Индо-Китайăн пысăк та анлă чăтлăхвăрманĕсенче ăнăçлă вăрçма май килĕ-ши? текен ыйту тăни çинчен, çак ыйтăва сÿтсе явни çинчен çырнă.

Тĕнчере çĕнĕ вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсем Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири колонисен тата пăхăнса тăракан çĕршывсен территорийĕсенчен хăйсен çар плацдармĕсене туса хурасшăн, унти халăхсене вăрçăра вилсе пĕтмелли салтаксем тăвасшăн. Вĕсем çавăн пек тума хăтланнипе хирĕç ирĕклĕхе юратакан халăхсем паттăррăн кĕрешеççĕ. вĕсем алла хĕçпăшал тытса хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлеççĕ. Çак кĕрешÿ тĕнчере пуç пулса тăма ĕмĕтленекен империалистсен агрессиллĕ планĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкĕ.

Д. БОЧАРОВ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

1952 çулхи январĕн 18-мĕшĕнче пулнă пĕрлехи лару

ПАРИЖ, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). ООН Генеральнăй Ассамблейин ĕнер кăнтăрла пулнă пĕрлехи ларăвĕнче Опека комитечĕ тăратнă резолюцисене пăхса тухнă. Çапла унта Опека совечĕн докладчĕ тăрăх çакăн пек резолюцисене пăхса тухса çирĕплетнĕ: опекăра тăракан территорисенчи халăхран килекен петицисене пăхса тухмалли йĕрке çинчен; урăх çĕре ямалли миссисене организацилесси тата вĕсем мĕнле ĕçлесси çинчен; Опека совечĕн ĕçне опекăра тăракан çĕршывсенчи тĕп халăхсем хутшăнасси çинчен; Эйве ăрăвне пĕрлештересси çинчен; опекăра тăракан территорисенче самоуправлени йĕрки е никама пăхăнмасăр пурăнмалли йĕрке тăвасси çинчен.

Генеральнăй Ассамблея тата çак ыйтусемпе резолюцисем çирĕплетнĕ: информаци ĕçĕ çинчен; хăйсем тĕллĕн пурăнмалли правăсăр территорисем çинчен; опекăра тăракан территорисенчи ялхуçалăхне аталантарасси çинчен; асăннă территорисенче хĕнесе наказани памалли йĕркене пăрахăçласси çинчен тата ытти ыйтусем те.

Администрациллĕ союзсем—колонисемлĕ державăсемшĕн опекăра тăракан территорисене хăйсен аллине çавăрса илме вĕсене колонисемпе пĕрлештерме пулăшакан пĕрлешÿсем. Администрациллĕ союзсем пирки Опека совечĕ колонисемлĕ державăсем хĕснипе йышăннă резолюцисĕр пуçне, ку ыйтупа тата СССР делегацийĕ сĕннĕ резолюци проектне те пленумра пăхса тухма тăратнă. Ку ыйтупа хăш резолюцишĕн сасăласси çинчен сăмах тухса каласа, Украина ССР, Польша тата Чехословаки представителĕсем СССР делегацийĕ сĕннĕ резолюци проектне ырланă. Çавна йышăнсан, вăл опекăра тăракан территорисенче хăйсем тĕллĕн пурăнмалли е никама пăхăнмасăр пурăнмалли йĕрке тума пулăшакан решени пулĕччĕ, тенĕ вĕсем.

Совет Союзĕн резолюци проектне виçĕ сасă çеç ытларах пулнипе сирсе янă: уншăн 13 делегаци сасăланă, ăна хирĕç—16 делегаци сасăланă, 26 делегаци нихăшне майлă та сасăламан. Ку результатсенчен çакă курăнать: колониллĕ державăсем хĕснĕ пулип те, нумай çĕршывсен делегацийĕсем опекăра тăракан территорисенчи халăхсене пусмăрласа тата эксплуатацилесе пурăнмалли политикăна ырлама килĕшмен.

Тĕнчери çĕршывсен Мускавра пухăнмалли экономикăллă канашлăвĕ пирки Америка хаçачĕ мĕн çырать

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатра çак кунсенче унăн Женевăри корреспонденчĕ Гофман çырнă статья пичетленсе тухнă. Вăл çав статьяра Мускавра тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвĕ пухăнасси çинчен çырнă.

Европăри экономистсемпе предприятисен хуçисем нумайăшĕ, коммунистсене кăмăлламан çынсемех, канашлăва кайма килĕшнĕ пирки хаçат хытă шикленсе ÿкнĕ.

Хаçат, сăмахран, экономикăллă канашлăва çаксем кайма килĕшни çинчен çырать: Дани делегацийĕн пуçлăхĕ Цейтен профессор—«Данири экономистсен аслă ăрăвĕн представителĕ» пулать; Швеци делегацийĕн пуçлăхĕ конъюнктура институтне ертсе пыракан Эрик Лунберг пулать, унта Швецири пуян хуçасен чылай представителĕсем кĕреççĕ; Италири чи пысăк коммерчески банксенчен пĕрин «Банк комерчеле итальяна» текенскерĕн представителĕ Раймондо Кравери экономикăллă канашлăва кайма килĕшнĕ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

★

Болгарири ĕççыннисем аслă Ленина хисеплесе асăнаççĕ

СОФИЯ, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири фабрикăсемпе заводсенче, çĕрĕç кооперативĕсен хуçалăхĕсенче, халăхăн вулав çурчĕсенче, шкулсенче В. И. Ленина асăнса хурлăхлă-чаплă пухусем тата вечерсем ирттереççĕ.

Совет государствине тата большевиксен аслă партине туса хунă В. И. Ленина асăнса Георгий Димитров ячĕпе тăракан пăравуссем тăвакан заводра хурлăхлă-чаплă пысăк вечер ирттернĕ. Вилĕмсĕр Ленин тата унăн аслă ĕçне малалла туса пыракан гениллĕ çулпуç И. В. Сталин çинчен, ССР Союзĕнчи коммунизмăн аслă стройкисем çинчен, Совет Союзĕнчи ĕççынnисем халăхсем хушшинчи мирпе туслăхшăн кĕрешни çинчен тунă доклада рабочисем питĕ интересленсе итленĕ.

В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине паллă туса, çĕршыври нумай хуласенче ССР Союзĕн коммунизм строительствинчи çитĕнĕвĕсене тата совет халăхĕ пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешнине кăтартса паракан выставкăсем уçнă. Пазарджик хулинче выставка курма пыракансем валли «Ленинизм—пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен кĕрешÿ ялавĕ», «В. И. Ленин—социализмлă государство организаторĕ» темăсемпе тата ытти ыйтусемпе докладсем ирттереççĕ.

Ленин кунĕсем Румынире

БУХАРЕСТ, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни халăхĕ В. И. Ленина хисеплесе асăнать. Бухарестри тата çĕршыври ытти хуласенчи предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче ĕççыннисен хурлăхлă-чаплă пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

Наукăпа культура обществисем пролетариллĕ революцин генийĕ çинчен докладсем, лекцисем тата калаçусем ирттересĕ организациленĕ. Румынири культурăпа наука пĕлĕвĕсене сарас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн нумай членĕсем çак кунсенче В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен, В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн аслă туслăхĕ çинчен ĕççыннисем хушшинче докладсем тăваççĕ.

Çĕршыври ялсенче В. И. Ленина асăнса литература вечерĕсем ирттереççĕ.

Лекцисемпе докладсем ирттереççĕ тата кинофильмсем кăтартаççĕ

ПХЕНЬЯН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи пур вырăнсенче те аслă Ленина хисеплесе асăнаççĕ. Кун çинчен Корейăри хаçатсем нумай материалсем пичетлеççĕ. Канвон провинцийĕнчи фабрикăсенче, заводсенче, учрежденисенче тата клубсенче В. И. Ленинăн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсем çинчен лекцисемпе калаçусем ирттереççĕ. Корейăн ССР Союзĕпе культурăллă çыхăнусем тытакан обществин Вонсан хулинчи уйрăмĕсенче «Ленин—пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен гениллĕ учителĕ» темăпа калаçусем ирттернĕ. Владимир Ильич граждан вăрçи вăхăтĕнче мĕнле ĕçленине тата вăл Совет государствипе организацилес тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕç тунине кăтартса паракан фотовыставкăсем уçнă. Ленин кунĕсенче Канвон провинцийĕнчи пур хуласемпе ялсенче те фотовыставкăсем тăваççĕ.

Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи Пхеньян, Аньчжу тата ытти хуласенче «Ленин в Октябре», «Человек с ружьем» тата «Ленин в 1918 году» кинофильмсене кăтартма тытăннă.

★

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтереççĕ.

Ĕнер хĕвелтухăçĕнчи фронтăн уйрăм участокĕсенче хăшпĕр çĕрте çапăçусем пынă. Янгуран çурçĕртерехри вырăнта тăшман пысăк пĕлтерĕшлĕ сăрт çине наступлени тума хăтланнă, Халăх çарĕн чаçĕсем тăшман наступленине ăнăçлă сирсе янă, унăн вăйĕсене чылай пĕтернĕ.

Вăтаçĕрти тата хĕвеланăçĕнчи фронтсенче хăшпĕр вырăнсенче çапăçусем пулнă, разведка отрячĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулса çапăçнă.

Ĕнер Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ, çав самолетсем унчченех, ытти самолетсемпе пĕрле, хĕвелтухăçĕнчипе хĕвеланăçĕнчи çырансем тăрăхĕнчи мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ пулнă.

Вьетнам Халăх çарĕн верховнăй командованийĕн представителĕ каласа пани

ВЬЕТНАМ, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнам информаци агентствин корреспонденчĕ Хоа-Бинь патĕнчи фронтран çапла пĕлтерет: Вьетнам Халăх çарĕн верховнăй командованийĕн представителĕ пресс-конференцире Франци агрессорĕсен Хоа-Бинь хули патĕнчи фронтра çапăçусене анлă сармалли планĕ путланса ларни çинчен каласа панă. Хоа-Бинь патĕнчи фронтра тата Ханойран Хоа-Бине каймалли шоссе çулĕ (6-мĕш номерлĕ çул) тăрăхĕнче çапăçусем мĕнле пулса пыни çинчен каласа, верховнăй командованийĕн представителĕ çапла пĕлтернĕ: январĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чухне Халăх çарĕн чаçĕсем Хоа-Бинь патĕнчи фронтра тата 6-мĕш номерлĕ çул тăрăх наступлени тума тытăннă, çав наступленире вĕсем тăшмана çĕнтернĕ. Халăх çарĕн чаçĕсем тăшманăн Хоа-Биньрен çурçĕртерехри оборонине аркатнă, хулара артиллерин пĕр ротине пĕтерсе тăкнă. тăшманăн 6 самолетне персе ÿкернĕ тата тăшман пехотин 2 ротине тĕппипех аркатса тăкнă.

Наступлени туса пырса, Халăх çарĕн чаçĕсем тăшманăн Хура юханшыв тăрăхĕнчи çул-йĕрне татнă, Ба-Ви сăрчĕ патĕнчи вырăна тăшманран тасатнă.

Çапла вара, халĕ тăшманăн Хоа-Бинь патĕнчи çар чаçĕсем тытăнса тăрасси вĕсене сывлăшран апат-çимĕçпе боеприпассем парса тăнинчен килет, тенĕ представитель.

Латинла Америка çĕршывĕсенче миршĕн тăракансен юхăмĕ вăйланать

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Америка континентĕнчи миршĕн тăракансен конгресне январĕн 22-мĕшĕнче ирттерме палăртнăччĕ, халĕ вара çав конгреса мартăн 11-мĕшĕпе 16-мĕшĕ хушшинче Рио-де-Жанейро хулинче ирттерме йышăннă. Çав конгреса ирттерме Латинла Америка çĕршывсенчи миршĕн тăракансем тимлĕ хатĕрленеççĕ. Латинла Америкăри пур çĕршывсенче те тенĕ пекех конгресс пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетсем тунă. Çавăн пек комитетсем Гондурас, Гаити çĕршывĕсенче тата Доминикан республикинче кăна туман, ку çĕршывсенче влаçра тăракан ушкăнсем мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе ĕçлекенсене хытă хĕсĕрлеççĕ.

Хăшпĕр çĕршывсенчен пĕлтернĕ тăрăх çакă паллă пулнă: çитес вăхăтра пухăнмалли конгреса халĕ иртнĕ конгресринчен нумайрах халăх пухăнмалла, халиччен миршĕн кĕрешес ĕçрен аякра тăнă ушкăнсемпе уйрăм çынсем те çав конгресс ĕçне хутшăнаççĕ. Çапла, Чилире президента суйлама халăхăн пĕрлĕхлĕ фрончĕ тăратнă кандидат, халăхăн социалистлă партийĕн лидерĕ Сальвадор Альенде хăйĕн суйлав кампанине аслă державăсем хушшинче мирлĕ майпа калаçса татăлса килĕшÿ тăвас шухăша ырланипе пуçланă. Гватемалăн Наци пухăвĕ тата правительствăн хăшпĕр членĕсем тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хирĕçÿсене мирлĕ майпа пĕтерме килĕшÿ тăвас шухăша ырлани çинчен пĕлтернĕ. Эквадорта верховнăй сулăн темисе членĕ халĕ асăннă позици çинче тăраççĕ. Бразилин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă çын, «Импренса популар» ятлă прогрессивнăй хаçатăн корреспонденчĕпе калаçнă чухне, миршĕн тăракансен континентри конгресне пухма йышăннине ырланă.

Кито радиостанцийĕ пĕлтернĕ тăрăх, миршĕн тăракансен Эквадорти комитечĕ нумай пулмасть митинг ирттернĕ. Митинга çĕршыври интеллигенцин паллă представителĕсем те пынă. Митинг миршĕн кĕрешес ĕçе вăйлатмалли çинчен решени йышăннă. Гаваннăри «Ла ультима Ора» хаçат Кубари медицина работникĕсен пĕрлешĕвĕн съезчĕ аслă державăсем хушшинчи хирĕçÿсене мирлĕ майпа йĕркелеме ыйтнине ырласа резолюци йышăнни çинчен пĕлтерет.

Корреспондентсен районсенчи канашлăвĕсем

ЕТĔРНЕ. Январĕн 12-мĕшĕнче стена хаçат редакторĕсен районти канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура çавăн пекех районти тата республикăри хаçатсен корреспонденчĕсем, колхозсемпе учрежденисенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсем чылай пулчĕç.

Канашлура ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе вырăнти пичетпе корреспондентсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен районти «Большевик» хаçат редакторĕ Я. К. Сорокин юлташ доклад турĕ.

Пренире пурĕ 9 çын—Кăкшăм ял Советĕнчи вулав çурчĕн заведующийĕ Е. Федотов, Тимирязев ячĕпе тăракан колхоз членĕ И. Львов, Г. Мытиков корреспондент, ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ А. Чехонин, районти ялхуçалăх пайĕн главнăй зоотехникĕ Н. Ефимов тата ытти юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем районти «Большевик» хаçат, республикăри «Чăваш Коммунипе» «Советская Чувашия» хаçатсен редакцийĕсем авторсен активĕпе çителĕклĕ çыхăну тытманни, хуçалăхпа культура ыйтăвĕсене çителĕксĕр çутатни, хаçатсенче пичетленекен критикăллă статьясен витĕмлĕхĕшĕн кирлĕ пек тăрăшманни çинчен каларĕç.

— Ильич ячĕпе тăракан колхозри çитменлĕхсем çинчен районти хаçатра тата республикăри хаçатсенче час-часах çыраççĕ, анчах та колхоз правленийĕ пичет критикăланинчен нимĕнле вывод та тумасть. Колхоз çуракине хатĕрленес ĕçре те, вăрман хатĕрлес енĕпе те юлса пырать,—терĕ Федотов юлташ.

И. Львов юлташ районти ялхуçалăх пайĕнче ĕçлекенсем колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме кирлĕ пек тăрăшманни, хаçат редакцийĕсенчен ярса паракан жалобăсене тĕрĕслес тата тивĕçлĕ мерăсем йышăнас ĕç çине çиелтен пăхни çинчен каларĕ.

Пренире тухса калакансем «Чăваш Коммуни» хаçатра фельетонсем, калавсемпе очерксем, литература страницисем сайра-хутра çеç пичетленни çинчен каларĕç. Г. Мытиков корреспондент хаçатра критикăпа библиографи материалĕсене ытларах пичетлемелли, редакцие пыракан çырусене тимлĕ пăхмалли çинчен каларĕ.

ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ А. Чехонин юлташ «Чăваш Коммуни» хаçатра пропагандистсене пулăшма юлашки вăхăтра лайăх статьясем пичетленнине палăртрĕ, малашне кун пек статьясене татах та ытларах пичетлеме сĕнÿ пачĕ.

Пренире тухса калакансем çавăн пекех районти «Большевик» хаçат промышленность предприятийĕсен ĕçĕ, ялсенчи медицина учрежденийĕсемпе шкулсен, профсоюз, обществăллă организацисен ĕçĕсем çинчен çителĕксĕр çырнине палăртрĕç.

Районти ялхуçалăх пайĕн главнăй зоотехникĕ Ефимов юлташ ялхуçалăх пайĕнчи ялхуçалăх пропаганди секторĕнчи работниксем колхозсенче малта пыракансен опытне сарас тĕлĕшпе нимĕн те туманни çинчен каларĕ.

Юлашкинчен канашлура ВКП(б) райкомĕн секретарĕ И. Д. Железнов юлташ тухса каларĕ.

ЧКАЛОВСКИ. Корреспондентсемпе стена хаçат редакторĕсен районти канашлăвĕнче 100 çын ытла пулчĕ. Канашлу районти «Коммунизм байрагы» хаçат тухма пуçлани 20 çул тултарни тата ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе ялкорсемпе стена хаçачĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Тенюков юлташ тунă доклада сÿтсе яврĕ.

Докладчик тата тухса калакансем «Коммунизм байрагы» хаçат 20 çул хушшинче тунă çитĕнÿсене палăртнипе пĕрлех, унăн ĕçне татах та лайăхлатма паха сĕнÿсем пачĕç, малта пыракансен, уйрăмах ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне сарас тĕлĕшпе районти хаçат çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç.

— Пирĕн районта,—терĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Каштанова юлташ,—ялхуçалăхĕнче малта пыракан çынсем, вăйлă тырпул туса илекен мастерсем нумай. Анчах районти хаçатра вĕсем çинчен сахал çыраççĕ.

Ун хыççăн «Дружба» колхоз председателĕ Булатов, хаçатăн активлă корреспонденчĕсем Тарасовпа Краснов тата ытти юлташсем каларĕç.

Юлашкинчен канашлура ВКП(б) райкомĕн секретарĕ А. Шорников юлташ каларĕ.

Кĕнеке нумай илеççĕ

ПЕРВОМАЙСКИ. Район центрĕнчи кĕнеке магазинĕнче ир пуçласа каçченех çын татăлмасть. Магазина пыракансем марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене, художествăллă произведени кĕнекисене туянаççĕ. 1951 çулта районти ĕççыннисем çак магазинта 87 пин тенкĕлĕх кĕнеке туяннă. Вырăс халăхĕн классикĕсен, çавăн пекех чăваш писателĕсен çĕнĕ кĕнекисем хăвăрт сарăлаççĕ.

Районти чылай служащисем магазинран кĕнекесем туянса хăйсен килĕсенче библиотекăсем тăваççĕ. Сăмахран, А. Ильин учитель, А. Гущина врач, В. Кузьмина учительница хăйсен библиотекисем валли темиçешер çĕр тенкĕлĕх кĕнеке туяннă.

Ф. АКИМОВ.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00317. Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.